# КАПКӐН

6-мӗш №

ИЮНЬ 1936 ç.




Ыр-ӑ-ла-тӑп!



Пӗтӗм тӗнчери пролетариатӑн йуратнӑ писатӗлӗ, тӑвӑл йӑхравҫийӗ, комунисӑмшӑн ҫулӑмлӑн кӗрешнӗ, Совет Сойузӗнчи халӑхсен литературисене йертсе пыраканӗ—Алексҫей Максҫимович Горький вилни пур ӗҫҫыннисене те хурлантарать.

# „Патшалӑх ҫекречӗ“

Пӗрре ҫапла каҫ пулнӑ, урампа иртсе пыратӑп. Сасартӑк ман тӗлти икӗ хутлӑ ҫуртӑн айалти хучӗн пӗр чӳречи шалтӑр-шалтӑр уҫӑлчӗ.

— Йултaш, ҫывӑхрах килӗр-ха. Ман сирӗнпе пӗр-икӗ сӑмах калаҫмали пур,—тенӗ хӗрарӑм сасси илтӗнчӗ.

Ҫаврӑнса пӑхрӑм. Ман ҫине кӑтра ҫӳҫлӗ сарӑ хӗрарӑм чӳрече витӗр пӑхса тӑрать.

Епӗ ним иккенне пӗлмесӗр, чӳрече умне утса пытӑм.

— Мӗн калаҫмали пур, калӑр. Епӗ васкатӑп. Ман театӑра ҫитмеле, унта мана арӑм кӗтет,—тетӗп васкаса.

— Ах, чӳрече витӗр калаҫма кичемрех. Епӗр калаҫнине урампа иртсе ҫӳрекенсем илтме, курма пултараҫҫӗ. Аван мар,—тет хӗрарӑм, хӑй темшӗн ун-кун пӑхкалать.

— Ҫук, епӗ кӗрсе тӑмастӑп! Васкатӑп. Каламалли сӑмахсем пулсан ҫакӑнтах кала. Епӗр калаҫнине ҫынсем курсан та, илтсен те, ним пулас ҫук, мӗншӗн тесен епӗр пӗрне-пӗри паллакан ҫынсем мар, пирвайхи хут куратпӑр,—тетӗп.

— Чӳрече витӗр калама йурамасть. Патшалӑх ҫекречӗ. Пӗр минута ҫеҫ кӗрсе тух, тархасшӑн,—йалӑнсах чӗнет хӗрарӑм.

— Тӗлӗнмеле. Мӗнле патшалӑх ҫекречӗ пулма пултарать халиччен курман, илтмен ҫынсен хушшинче?—тесе шухӑшлатӑп хам пуҫпа.

Хӗрарӑм тархасласах йалӑнать. Хватгерне кӗме ыйтать.

Мӗн тӑвас тетӗн? Ман кӑмӑл ҫемҫе. Ҫын ыйтнине хирӗҫ пулма пултараймастӑп.

— Йурӗ еппин. Пӗр минута ҫеҫ,—хӗрарӑм хватерне кӗтӗм...

Хватерӗ пӗчӗкӗ ҫеҫ—пӗр пӳлӗм. Алӑкран кӗрсенех лайӑх одейал витнӗ, тирпейлӗ пуҫтарнӑ кравать ларать; тӗпелти кӗтесре пӗр сӗтел, сӗтел ҫинче кӗнекесем, хутсем тирпейлӗн купаланса тӑраҫҫӗ...

— Акӑ мӗн, йултaш, есӗр халӑх сутӗнче ӗҫлетӗр пулас? Епӗ сире ҫавӑнта час-часах куратӑп. Ҫавӑнпа сиртен саккун йӗркине ыйтса пӗлесшӗн ҫеҫ чӗнсе кӳртрӗм,—тесе ыйтать манран хӗрарӑм.

Епӗ пуҫа пӑркалатӑп:

— Ҫук, епӗ халӑх сучӗ таврашӗнче нихӑҫан та ӗҫлемен. Саккун тӗлӗшпе сахал пӗлетӗп. Епӗ финанс ӗҫӗнче,—тетӗп...

— Ой, суйатӑр! Епӗ сире сутра темиҫе хут та курнӑ. Сирӗн хушаматӑр мӗнле-ха?

Хам та сисмерӗм, йата шатӑртаттарса каласа патӑм.

— Апла епӗ йанӑшрӑм пулас. Ҫын тӗслӗ ҫын пулать ҫав. Ҫапах та есӗр практикӑра ӗҫлекен ҫын саккун йӗркине пӗлеттӗр ӗнтӗ.

— Кӑшт-кашт пӗлкелетӗп.

— Епӗ студенткӑ. Ҫамрӑк мар ӗнтӗ—28 ҫулта. Иртнӗ ҫуркунне епӗ пӗр илемлӗ ҫынпа паллашрӑм. Вӑл мана малтанах: „Авланман. Сана качча илетӗп“—тесе суйрӗ. Епӗ ун сӑмахне ӗнентӗм. Виҫӗ уйӑх вӑхӑт иртсен тин пӗлтӗм: вӑл авланнӑ, ачи те пур. Халӗ ӗнтӗ епӗ те йӑвӑр ҫын. Вӑл хӑйӗн йатне йарасран хӑраса, мана ача пӑрахтарасшӑн тӑрӑшать. Епӗ пӑрахасшӑн мар. Ҫавӑн пирки вӑл: „Пӑрахмастӑн пулсан, епӗ сана курман та, илтмен те. Есӗ мана нимӗн те тума пултараймастӑн“—тесе хӑратать. Чӑнах та епӗр пӗр-пӗринпе ҫывӑх пӗрлешсе пурӑннине никам та курман, никам та пӗлмест. Сута парсан та ҫвидетӗл ҫук...

— Ав мӗнле ҫекрет сирӗн?—шухӑшласа илтӗм.

— Ах, пӗтрӗмӗр! Ав килет!—сиксе ӳкрӗ хӗрарӑм.

— Кам килет?

— Ҫав, ман пата ҫӳрекен арҫын. Пытан хӑвӑртрах. Есӗр ман хватерте иккенне курсан, вӑл вара пӗтӗмӗшпех отказать тума та пултарать. Ун ӑсӗ ҫитӗ. Вӑл пӗр айапсӑр ҫын ҫине, сан ҫине те йӑвантарӗ,—терӗ хӗрарӑм, хӑй хӑраса ӳкнипе сиксе чӗтрет.

Чӳрече витӗр пӑхрӑм. Ак тамаша, пирӗн финанс учрежденири пуҫлӑхсенчен пӗри Иван Иванчӑ Хӗрлемесӑв йултaш килет.

— Ӑҫта пытанас?

— Крават айне кӗрсе вырт.

Урӑх шухӑшласа тӑма вӑхӑт ҫук, Хӗрлемесӑв коритора кӗчӗ, ура сасси илтӗнет. Шалтӑр-шалтӑр крават айне кӗрсе выртрӑм. Хӗрарӑм уҫӑ чӳречерен урамала пӑхса тӑрать. Епӗ крават айӗнче малала мӗн пуласса кӗтетӗп. Ҫӗрти ҫӳлтине хама хам хӑвармасӑр вӑрҫатӑп: „Мӗншӗн, ухмах, кӗтӗм“? Иван Иванӑч хм-хм... ӳсӗркелесе кӗчӗ. Тӳрех крават ҫине ларчӗ. Урисене хутласа крават айнеле чикрӗ. Урисем шӑп ман ҫӑвар тӗлне пулчӗҫ. Атти тӗпӗнчен тӳсме ҫук шӑрш кӗрет, те сысна навусӗ ҫине пуснӑ, те етемӗнни ҫинех чиксе кӑларнӑ... Фу, ирсӗр шӑршӑ!..

— Ну, Маруҫҫӑ! Епӗ сан патна йулашки хут килтӗм. Хырӑм пӑрахсан, хам арӑмран уйӑрӑлса, сана качча илетӗп. Пӑрахмастӑн пулсан, епӗ сана курман та, илтмен те. Ҫвидетӗл ҫук,—тет Хӗрлемесӑв, хӑй савӑнӑҫлӑн лӑх-лӑх-лӑх кулать...

Маруҫҫӑ чӗнмест. Вӑл пӗрех уҫӑ чӳрече витӗр урамала пӑхса тӑрать, ним тӑвайман йенне пӳрнинчи чӗрнине ҫырта-ҫырта илсе сурать урайне.

Тинех лекрӗм, ку хӗрарӑм мана Иван Иванчӑ килессе пӗлсе, хӑй хватгерне ҫвидетӗл тума чӗнсе кӗртнӗ. Вӑл сута парсан, епӗ Иван Иванчӑ ҫинчен ҫвидетӗл пулса тухсан, вӑл мана хӑйӗн учрежденинчен хуса кӑларса йарӗ, тесе шухӑшласа Иван Иванчӑ атти тӗпенчи „тутлӑ“ шӑрша шӑршласа выртатӑп.

— Ҫвидетӗлсӗр ачана ман ҫумма ҫыпӑҫтарса хураймастӑн,—тет Хӗрлемесӑв.

Маруҫҫӑ ури ҫине сиксе тӑчӗ:

— Ултавҫӑ! Есӗ мана пӗрре улталарӑн. Тата улталаса ача пӑрахатарасшӑн. Ҫук, халӗ ӗнтӗ улталаймӑн. Епӗ хырӑм пӑрахмастӑп. Ача ҫурататӑп,—татса хучӗ Маруҫҫӑ.

Хӗрлемесӑв ури ҫине тӑчӗ. Алӑк патнеле утса пычӗ:

— Ним те тӑваймастӑн есӗ мана. Епӗ сана курман та, илтмен те, сан патна ҫӳремен, никам та курман, илтмен. Сывӑ пул!—тухса кайма алӑк хӑлӑпӗнчен йарса тытрӗ.

Маруҫҫӑ крават патне хӑвӑрт утса пычӗ.

— Суйатӑн! Манӑн ҫвидетӗл пур. Акӑ вӑл. Тух йултaш!—хӗрарӑм ман урaран тытса, крават айӗнчен сӗтӗрсе кӑларчӗ.

Хӗрлемесӑв алӑк умӗнче йупа пек хытса карӗ. Епӗ хӑпӑл-хапӑл ура ҫине сиксе тӑтӑм:

— Хӗрлемесӑв йулташ, есӗ ман ҫине ан ҫилен! Епӗ айӑплӑ мар кунта. Вӑл мана „патшалӑх ҫекречӗ“ тесе суйса кӳртрӗ. Халӗ ӗнтӗ ҫвидетӗл туса хучӗ.

— Чейе шухӑшланӑ,—хӑй тӗллӗн калаҫса илчӗ Хӗрлемесӑв.

— Ха-ха-ха-ха!.. Есӗ манран чейе пулма тӑрӑшрӑн та, пултараймарӑн,—савӑнӑҫлӑн кулса йачӗ Маруҫҫӑ...

Ҫапла епӗ кӗтмен ҫӗртен ҫвидетӗл пулса тӑтӑм. Маруҫҫӑ ача ҫуратрӗ. Сут пулчӗ. Хӗрлемесевӑн шалуне тӑватта пӳлчӗҫ, пӗр пайне Маруҫҫӑна ачине пӑхса ӳстерме пачӗҫ.

Ак ҫапла пуҫланса пӗтрӗ „патшалӑх ҫекречӗ“. Иван Иванчӑ мана айӑпламарӗ. Халӗ те ҫав учрежденинчех ӗҫлетӗп.

М. Н. Данилӑв-Чалдун.

# Шаклапуҫ Шӑнттарайӗ хӗр шырани

Халиччен курман инкеке курса лараттӑм еп кӑҫал, атсемӗр! Никам айӑпӗпе те мар, хам айван пуҫӑм пирки кӑна. Ӳлӗмрен нихӑҫан та кун пек ухмахланассӑм ҫук,—пӗтӗм хура халӑх умӗнче сӑмах паратӑп.

Есӗ ак ҫакӑн пек пулчӗ: Шелепи уйавӗ хыҫҫӑн, пӗр ирхине, хӗвел тухнӑ-тухманах, ман хваттер алӑкне такам ҫав тери хайаррӑн шаккама пуҫларӗ. Шартах сиксе вӑранса кайрӑм ирхи пылаклӑ ыйӑхран.

— Кам шаккать? Мӗн ҫывӑрма памастӑр?—тесе ыйтатӑп.

—Епӗ, Шаклапуҫ Шӑнттарайӗ,—илтӗнет тул йенчен ҫилӗлӗ сасӑ.

— Мӗн кирлӗ сана?

— Уҫса кӗрт хӑвӑртрах, вара мӗн кирлине хӑвах курӑн.

— Мӗн пулнӑ тата?—ыйтатӑп тарӑхнипе.

— Уҫ, уҫ! Нумай калаҫса ан тӑр. Унсӑрӑн алӑкна ҫӗмӗрсех кӗретӗп,—тет Шӑнттарай, чышкисемпе алӑка кӗмсӗртеттерсе. Нимӗн те тума пулмарӗ вӗт, уҫса кӗртесех пулчӗ.

Ман Шаклапуҫ Шӑнттарайӗ, алӑк сулли урлӑ каҫнӑ-каҫманах, куҫӗсене алтӑр пек чарса пӑрахрӗ те, чышкисене чӑмӑртаса ман патӑма ӗрленсе пычӗ:

— Ех-е-е! Есӗ-им-ха вӑл ман ҫинчен „Капкӑн“ ҫине ҫырса, ырӑ йатӑма республикӑ умӗнче намӑса йараканни?—тесе кӑшкӑрса йачӗ вӑл, шӑлӗсене Краснов-Кӗҫӗннин сӑввинчи хайар шаккал пек шатӑртаттарса.

— Мӗн ҫӗмӗрлетӗн ара? Нимӗн те ӑнланаймастӑп, —терӗм епӗ, кайала чакса.

— Ме, вула, саттана пуҫӗ!—сӑмсаран тӗртрӗ мана Шаклапуҫ „Капкӑнӑн“ 4-мӗш нумӗрӗпе.—Ман ҫинчен ҫырмасӑр темӑ тупаймарӑн пуљ. Халӗ ӗнтӗ мана никам хӗрӗ качча тухас ҫук, так авланаймасӑрах аслапланса ӗмӗрӗм иртсе кайӗ...

Тинех ӑнланса илтӗм Шаклапуҫ Шӑнттарайӗ ман ҫине мӗн пирки тарӑхнине. Ӑнланса илтӗм те хамӑн та шеллес килсе кайрӗ мӗскӗне.

— Чим-ха, чим, ес ытлашши ан хӑмпӑлан-ха, —лӑплантарма тытӑнтӑм еп ӑна.—Авланас кӑмӑлу пулсан, хам пулӑшӑп сана ку ӗҫре,—терӗм.

— Те-ем, пултарайрӑнах-ши?—ыйтать Шӑнттарай, ӗненчӗксӗрӗн ман ҫине пӑхса.

— Епӗ-и? Ара, епӗ чи чаплӑ йевӗчӗ вӗт!—тегӗп хавхаланса.—Хам ӗмӗрӗмре епӗ сан пек йӗкӗтсене ҫеҫ-им мӑшӑрлантарса курнӑ? Аҭа халех тухса кайӑпӑр хӗр шырама.

Ку сӑмахсем хыҫҫӑн манӑн тусӑм кӑштах лӑпланчӗ. Вара епӗр тепӗр ҫирӗм минутранах йалсем тӑрӑх Шаклапуҫ Шӑнттарайне ваљљи хӗр шырама тухса кайрӑмӑр.

* * *

Ҫитсе кӗтӗмӗр Хыркасси вӑрманне. Тухрӑмӑр пӗр ывӑҫтупанӗ ҫинчи пек курӑнса ларакан илемлӗ уҫланкӑна. Пӑхатпӑр—пирӗнтен 5—6 чалӑшра тенӗ пек кӑна, тункати ҫинче пӗр ачалӑ хӗрарӑм лара парать. Хӑй вӑл пӗр 30—32 ҫулсене ҫитнӗскер пулмала. Хӗрарӑма курсанах Шаклапуҫ мана айакран тӗртрӗ те ытарлӑн куҫне хӗссе вӑрттӑн кулса илчӗ. Анчах та хӗрарӑм ӑна курсанах шартах сиксе ӳксе ҫари-и! ҫухӑрса йачӗ:

— Ы-ыхх! Хӑрарӑмҫке!—терӗ вӑл.

— Мӗнрен хӑрарӑн апла?—ыйтрӗ Шӑнттарай йӑвашшӑн.

— Ара, тытса чуптӑвать пуљ тесе,—тавӑрчӗ хӗрарӑм, именнӗ пек пӑркаланса.

— Кхых-кхык-кхык!—ҫӑварне уҫмасӑрах кулса йачӗ Шаклапуҫ.—Сана ӑҫтан чуптӑвӑп епӗ, сан арку ҫинче ачу пур вӗт?

— Е-е, ҫапла пулмасӑр,—терӗ хӗрарӑм.—Ачине чечек парӑпӑр та выљаса ларать вӑл.

Шӑнттарай мана каллех айакран кӑлт-кӑлт тӗрткелет:

— Кур ав, хӗрарӑм ларать. Тен вӑл пире хӗр шырама пулӑшӗ?

—Хӑйулӑрах пул. Ӗҫ хута кайать, калаҫ нимӗн именмесӗрех,—тетӗп епӗ ӑна шӑппӑн. Шаклапуҫ чӑнахах та хӑйулӑланса хӗрарӑм умне пырса тӑчӗ те, сӑмах ваклама тытӑнчӗ.

— Есӗ, инке, пирӗнтен пӗртте ан хӑра. Епӗр ырӑ шухӑшлӑ ҫынсем, хӗр шырама тухрӑмӑр.

— Е-е, ырӑ шухӑшлӑ пулмасӑр... Апла-капла пулсан, винавачӗ сан ҫинче,—йӑраланать хӗрарӑм, Шаклапуҫ ҫинчен куҫне илмесӗр.

— Чӑн та ҫапла,—тет Шӑнттарай.—Чӑн та хӗр шырама тухрӑмӑр. Ҫук-ши, инке, сирӗн таврара качча кайма тивӗҫлӗ пикесем?

— Ереччӗ... Лепле ҫук пултӑр? Епӗ те качча кайма шухӑшлатӑп-иҫ.

— Ҫук, инке, мана ҫамрӑкраххи кирлӗ. Епӗ саррине те вӑраммине, ҫӳҫ хӗррипе кӑтрине шыратӑп.

— Епӗ те ҫамрӑк-иҫ, епӗ те сарӑ-иҫ...—хыпкаланса ӳксе ури ҫине сиксе тӑчӗ хӗрарӑм. Анчах Шаклапуҫ унӑн-кунӑн ваљт-ваљт ҫеҫ пӑхкаласа илчӗ те йӑлт кӑна курӑнчӗ уҫланкӑ тӑрӑх. Аранаран хӑваласа ҫитрӗм епӗ ӑна.

— Ех, тӑмписмен!—кӑшкӑрса йатӑм епӗ ӑна, хулӗнчен ҫавӑрса тытса.—Ҫапла пӑрахса тараҫҫӗ-и вара телей тӗлне пулсассӑн.

— Кирлӗ мар мана ун пек телей. Ху качча илсе ҫӳре

ачалă хĕрарăмсене,—мăкăртатса илчĕ Шаклапуç.

— Ех, тусăм, ес капла калаçнипе нихăçан та арăм туйанаймăн. Мана, ватă çынна, кăштах итлес пулать санăн.

— Ну, мĕн, вĕрентме пултаратăн-ха вара ес мана хăвăн ваталăхупа?

— Еп сана вĕрентĕп, итле кăна.

— Ну, итлетĕп... Вара?

— Есĕ хĕр пăхнă чух йăвашшăн та çемĕçĕн, майĕпен те йерипен калаçма тăрăш. Хĕрĕ санран: —Йурататăн-и?—тесе ыйтсан, чунтан-вартан йурататăп те:—Йута чупмăн-и?—тесен, ĕмĕрĕмре те, пĕр хĕрарăмпа та пурăнассăм çук те. Ача-пăчаран хăракан арçынсене кураймастăп те; уйăрăлас, тăвас пулсан, алимент тӳлетĕп, те. Саккунĕ çапла хаљ, шăллăм!

— Йурĕçке, йурĕ... Ес калана пек пултăр. Анчах тархасшăн хăвăртрах ут,—терĕ те Шăнттарай, виçшер метăрлă утăмсемпе малала йарăнчĕ.

* *
*

Çитрĕмĕр Хыркассине. Шыраса тупрăмăр пике пек илемлĕ çамрăк хĕре. Шаклапуçпе иккĕшне, калаçса сăмах татмашкăн тесе, çенĕке кĕртсе йатăмăр. Хам вара, çамрăксене калаçма чăрмантарас мар тесе, çенĕк хыçне тухса лартăм та кукăр чăпăклă пăхăр чĕлĕмĕме паклаттарма пуçларăм.

Шаклапуçпе хĕр-пике шалта мăкăр-мăкăр калаçса лараççĕ. Епĕ икĕ хăлхана чанк тăратса итлетĕп.

— Есĕ манран пуçне кама та пулин йуратмастăн-и?—ыйтат хĕрĕ.

— Чунтан-вартан йурататăп!—ответлет Шаклапуç çăвар туллин.

— Есĕ манпа мăшăрлансан, йута чупмăн-и? —татах ыйтать çамрăк хĕр.

— Ĕмĕрĕмре те пĕр хĕрарăмпа пурнассăм çук! —тет Шăнттарай.

—Есĕ ача ашшĕ пулма йурататăн-и?

— Кураймастăп епĕ вĕсене!—перет ман Шаклапуçăм.

— Мĕншĕн вара?—ыйтать хĕр.

— Алимент тӳлетĕп,—кăшкăрса йачĕ Шăнттарай. Унччен те пулмарĕ, çенĕк алăкĕ шалтлатса уçăлчĕ те Шăнттарай тулала çил пек вăрхăнса тухрĕ.

Пулаймарĕ-ĕ!—тесе çухăрса йачĕ вăл, аран-аран сывлăш çавăрса илсе.—Ĕнсерен кăна персе кăларса йачĕ вăл мана...

— Мĕн килĕшеймерĕ-ха апла?

— Есĕ пĕтертĕн ман пуçа, есĕ пĕтертĕн! Урăх нихăçан та сан сăмаххуна итлессĕм çук.

— Вăйпах вĕрентесшĕн çунмастăп та. Тепĕр çĕре çитсен, ху пĕлнĕ пек калаç, анчах ман çине ӳпкелемеле ан пултăр,—тавăртăм еп Шаклапуç çине çавтери вĕчĕрхенсе (темĕнчул тăрăшсан та ыр йат илтеймĕн çав етемрен).

Пĕр-пĕрин çине тарăхнипе тутасене тăсрăмăр та, пĕрне-пĕри урăх нимĕн сăмах чĕнмесĕрех тухса утрăмăр. Кайсан-кайсан, çитсе кĕтĕмĕр тепĕр салана, шыраса тупрăмăр качча кайма çул çитнĕ йаштака хĕре. Халĕ ĕнтĕ Шаклапуç хăй пĕлнĕ пек калаçать, епĕ пĕр сăмах та шарламастăп.

Ку хутра ман Шăнттарай правуртарах калаçма пуçларĕ. Анчах хĕрĕ унтан та маттуртарах калаçать—çăмаха сăвăрать кăна. Шыв пек йухать хĕрпе каччăн халапĕ.

Хĕр:—Апла, апла... Маттур каччă ес, Шăнттарай. Çитменнине тата сăвăсем те çыркалатăн пулас-ха?

Шаклапуç:—Ка-акшă! Ман çинчен „Капкăнра" та пичетленсе тухнă,—карахтĕристĕк.

Хĕр:—Авланасах тетĕн-и вара ес?

Шаклапуç:—Ка-акшă! Çемйелĕ пурнăçа епĕ питĕ хисеп тăватăп. Хăвăн кил-çурту, хăвăн кĕрекӳ, хăвăн мăшăру...

Хĕр:—Апла ача-пăчана та йурататăн пуљ есĕ?

Шаклапуç (кулать);—Кхык, кхык! Çу-ук, йуратмастăп. Ача-пăча вăл мăшăрлă пурнăçа чăрмантарма кăна.

Хĕр:—Вăл апла пулĕ те-ха, анчах ача вăл санран ыйтмасăрах çуралма пултарать-çке-ха?

Шаклапуç:—Какшă так? Тăвас мар тесен нихăçан та çуралмасть. Аборт тутарма пулать вĕт.

Хĕр:—Апла ес ачалă-пăчалă пулăсшăн мар иккен-ха?

Шаклапуç:—Йаснă!

Хĕр: Авлансан çырăнас та темĕн апла есĕ?

Шаклапуç:—Йаснă! Мĕн çырăнса тăккаланмала. Çырăннă чух укçа тӳле, уйăрăлнă чух укçа тӳле, —капла манăн пĕтĕм мулăм та çитес çук.

Хĕр:—Ну, çитĕ. Сăмах татăлчĕ; епĕ сана качча тухмастăп. Саккун ес шутланă пек тума хушмасть. Сывă пул!

Шаклапуç тĕлĕннипе çăварне çерçи вĕççе кĕрес пек карса пăрахрĕ те йупа пек хытса ларчĕ. Урăх пĕр сăмах та тупса калаймарĕ вăл хĕре хирĕç. Сăмса тăрăх кăна пăхса тухса кайрăмăр вара хĕр патĕнчен.

Шăнттарайпа епĕр хĕр шыраса тата çичĕ йала çитрĕмĕр. Анчах епĕр пăхнă хĕрсем пĕри те Шаклапуçа качча тухасшăн пулмарĕç. Шаклапуç Шăнттарайĕ пайан кун та пулин хусах пурнăçпа пурăнать. Епĕ хам та пайан кунччĕнех ăна ваљљи хĕр шыратăп.

Шăнттарайăн йевĕчи Илле Тукташ

---

## Пĕр селĕп чăваш çинчен

Çверчков ӳкернĕ



— Михал Федорович! Акă „Капкăн" çĕнĕ номерĕ, — вула-ха!

— „Капкăн" я не читаљ ни пли какой погоде и...читать не намелен!

*(Малала мĕн пулнине 7-мĕш страницăра тупса вула).*

**А. Флит**

# ТĔЛПУЛНИ

## Иккĕн выљамали кулăшла пиеса.

*Чăваш Репертком сценă çинче лартма ирĕк панă.*

Пĕчĕк станци умĕ. Пилеш йăвăç айĕнче тăрăхла сак ларать. Сак çинче—каçăр сăмсалă хĕр. Пуçне тутăр çыхнă. Çумне чăмадан лартнă. Аван хĕр. Ун патне кепкă тăхăннă каччă тухрĕ. Майне кашне çыхнă, уринче çутă калуш, аллинче чăмадан. Аван каччă. Пырса хĕрпе йунашар ларать.

**Каччă:**—Кăштах... сиксе ларайм ăр-ши?

**Хĕр:**—Ларах, лар, вырăн çитет.

**Каччă:**—Инçĕ кайатăн пуљ-ха?

**Хĕр:**—Çук, вăтăр икĕ километăра çех, автобуспа каймала.

**Каччă:**—„Коминтерна" мар пуљ те?

**Хĕр:**—Çавăнта.

**Каччă:**—Унта пурăнатăр-и?

**Хĕр** (панулми çинĕ май):—Унта пурăнатăп...

**Каччă:**—Çемйўпех-и?

**Хĕр:**—Çемйепех.

**Каччă:**—Колхозра-и?

**Хĕр:**—Колхозра.

**Каччă:**—Ĕçлетĕр-и?

**Хĕр:**—Ĕçлетĕп.

**Каччă** *(çумнерех сиксе)*:—Епĕ сире таçта курнă, паллавă çын пек есĕр.

**Хĕр** *(ун çумĕнчен сиксе)*:—Епĕ сире курнине астумастăп. Интересленместĕп те.

**Каччă:**—Калаçасшăн та марçке есĕр. Ытла чĕмсĕр.

**Хĕр**—*(хитреленсе)*:—Çапла çуралнă пуљ...

**Каччă** *(халăха)*:—Ман куç курать? Ку тем тесен те, пăхсах курăнать ĕнтĕ, йалти хĕр. Хула мĕн иккенне шăршласа та пăхман пулас-ха, куљтурă йенĕпе те айван. Кăштах авкалас пулать.

**Хĕр** *(кулсарах)*:—Есĕ пулмăн-ши çав авкалаканни?

**Каччă:**—Тен епĕ те пулăп.

**Хĕр:**—Асту, шăлна хуçса пăрахăп!

**Каччă:**—Е-е-хе... ес хайар-çке. Сирĕнпе паллашма ирĕк парăрччĕ, ĕнтĕ. Мана „Васили Лукич Çидăрăв" теççĕ. Есĕр мĕн йатлă?

**Хĕр:**—Ним йатлă та мар. *(Тепĕр улма çиме пуçларĕ)*.

**Каччă** *(вăрăмăн сывласа)*:—Аван антонăвкă.

**Хĕр**—*(кĕсйинчен тепĕр улма кăларса пачĕ)*.

**Каччă:**—Спасибă сире. Епĕ сирĕнпе чипер, куљтурăлă çын пек, нимĕн усал шухăшсемсĕрех калаçатăп вĕт. Çитменнине пĕр сак çинче ларса пĕр автобуса кĕтетпĕр.

**Хĕр:**—Есĕр те „Коминтерна" кайатăр-и мĕн?

**Каччă:**—Мучи патне çитсе курас терĕм. Кĕске вăхăтлăх отпускра та...

**Хĕр:**—Мучун хушамачĕ мĕнле вара?

**Каччă:**—Çидăрăв, Иван Маркăч.

**Хĕр** *(пĕлнĕ пулса)*:—Хăрах куççăрскер-и?

**Каччă:**—Сулахай куçĕ çук.

**Хĕр:**—Карчăкĕ харсăр-и унăн?

**Каччă:**—Карчăкĕ питĕ харсăр çав.

**Хĕр:**—Пĕлетĕп. Пирĕнтен тăват кил урлă пурăнать.

**Каччă:**—Ну, куратăн-и епĕ суйманнине! Есĕ ахалех хăратăн.

**Хĕр:**—Нимĕнрен те хăрамастăп, еп ахаљ çех.

**Каччă:**—Епĕ çавăн пек тĕттĕм кĕтесе мĕншĕн кайни çинчен есĕ мĕншĕн ыйтмастăн.

**Хĕр:**—Вăл тĕттĕм кĕтесри колхозниксем районĕпе пĕрремĕш вырăн йышăнчĕç пулсан, ытла та аван кĕтес пулса тăрать ман шутпа.

**Каччă:**—Охо.. сан пуç ничево ĕçлет пулас.

**Хĕр:**—Есĕ йалти хĕр, пуçне тутăр çыхнă та, тăмсай ларать тесе, унпа вăхăт иртерме тытăнтăн пулас.

**Каччă** *(пăлханса)*:—Тĕрĕс мар... ун пек тискер шухăшсем пуçра та пулман ман. Есĕр апла калласса кĕтменччĕ... Епĕ кунти çын мар вĕт, кунтан 300 çухрăмра совхозра комбайнерта ĕçлетĕп...

**Хĕр:**—Ăçта апла?

**Каччă:**—„Розă Љуксембург" йатлă тĕштыр совхозĕнче.

**Хĕр** *(савăнса)*:—Пĕлетĕп, пĕлетĕп... Хура хăма çинче çакăнса тăрать. Çĕрĕç пайĕнче куртăм... мĕнле пĕлес мар-ха, пĕлетĕп.

**Каччă** *(пăлханнине систермесĕр)*:—Вăл тĕрĕс пулман... çакнă та, каллах илнĕ.

**Хĕр:**—Ç-у-ук... илмен. Ма суйатăн? Ĕнер çеç куртăм, пĕтĕм совхозĕпех çакăнса тăрататчĕ-ха.

**Каччă:**—Мĕнех уншăн? Çакăнса тăратпăр-тăратпăр та, унтан анатпăр. Мĕнех вăл хăма!

**Хĕр:**—Е-е-х.. намăс та вара! Хăй çавăн пек маттур каччă!..

**Каччă** *(хастарланса)*: — Мĕн вара? Начарах мар-и мĕн?

**Хĕр** *(ăна пăхкаласа)*:—Кепкăпа, кашнепе, çĕнĕ калуш тăхăннă, кхм... *(кулса йачĕ)*. Çав тери аван каччă ăçта çакăнса тăрать! Ху-ра хăма çинче!

**Каччă:**—Ман бригадă кайра пыраканнийех мар. Вăтам йулса пыраканни. Епĕр плана 80 процента çитертĕмĕр. Анчах пирĕн вăйлă уксакланисем пур вăт, 50 процент аран тултараççĕ.

**Хĕр** *(куракан халăха)*: Пăхăр-ха, есĕр илтетĕр-и, çамрăксем?... Ай-йа-й, ай, ай!.. Мĕнле кулăш та! Илтетĕр-и, мĕнпе мухтанать? Вăтам йулса пыраканни тет!

**Каччă** *(çиленсе)*: Е-ех, мĕн пĕлетĕн есĕ пирĕн ĕçре? Карташĕнче купăста йăранĕ чаватăн пулĕ çав йе ĕне картивчи улăма улăштарса тăратăн пуљ, çавă çех. А комбайнер вăл—специалист. Хуть те ăçтала çаврăнсан та—руљ те, рукойаткă!

**Хĕр:**—Пирĕн „Коминтернта" комбайнерсем 129 процент тултараççĕ. Мĕн калăн кун пирки?

**Каччă:**—Сана аван калаçма. Хура тăпра çинче сана епĕ 150 процент та шартлаттарса паратăп.

Ак есӗ хӗрлӗ тăпра ҫинче тытăнса пăх-ха—тăпра муклашкисем унта, ҫум курăкӗ...

Хӗр:—Ҫӗрӗнчен килмест вăл, сирӗн ҫынӗсем сӳсленчӗк.

Каччă:—Апла епӗ те сӳсленчӗк-и?

Хӗр:—Вăл хăвна авантарах курăнма кирлӗ: 80 процент ҫеҫ тултартăн пулсан...

Каччă:—Ак тытăнатăп та, ҫӗре ҫитеретӗп.

Хӗр:—Тытăн ҫав.

Каччă:—Тытăнатăп та—санран та ыйтмастăп.

Хӗр (*каччă ҫаннинчен тытса*):—Есӗ ан ҫилен, епӗ санпа кăмăлран калаҫатăп...

Каччă:—Мӗн йатлă есӗ?

Хӗр:—Машă тесе чӗн мана.

Каччă:—Пӗтӗмӗшпе каласан та-и?

Хӗр:—Мӗнле пӗтӗмӗшпех каласан вăл?

Каччă:—Итле-ха, Машă, сирӗн „Коминтернта" Елизавета Иванăвнă Карпăвă йатлă хӗр пур, ҫавна пӗлетӗн-и?

Хӗр:—Лизăна-и? Пӗлетӗп. Мӗн-ха вара?

Каччă:—Сан шутпа аван хӗр-и вăл?

Хӗр:—Апграмасӑ, аванскер. Ман кăмăла кайаӑ вăл.

Каччă:—Ҫав хӗре, пӗлтӗр мучи мана тупса парасшăнчӗ, анчах килме нимӗнле те вăхăт тупаймарăм. Халӗ, вăхăт пур чухне, ҫитсе пăхас терӗм. Кăмăла кайсан—авланатăп. Нимӗн пăхмасăрах авланатăп. Отпуска ахалех иртерес мар.

Хӗр (*пит хытă тӗлӗнсе*): У-уй... ес мӗнле хастарскер! Лизă сана пырӗ-ши? Ыйтрăн-и ес унтан?

Каччă:—Пыма кирлӗ. Тăн-пуҫлă хӗр пулсан пыратех вăл. Камăн хăйӗн телейӗнчен пăрăнас килет. Есӗ тăнлă-пуҫлă хӗр пулас, Машеҗкă, шухăшласа пăх-ха ес, Машеҗкă: 24 ҫулхи каччă, комбайнер-бригадир. Вăтам шутпа шутласан уйăхне 350 тенкӗ ӗҫ укҫи илет тата хватер пур.

Хӗр:—Тата хура хăма ҫинчен анаймасӑ. Мӗнрен упăшка мар вара?

Каччă:—Мӗн ӗҫ пур ун хура хăмапа? Хăмапа пурăнмасӑ вӗт вăл, манпа пурăнаӑ.

Хӗр (*хастарăн*): —Мӗнлеесӗр ҫавăн пек калаҫатăр-ха? Вăтам йулса пыракан каччăпа ҫыхăнма питех аван тетӗр-и мӗн?

Каччă:—Анчах уншăн вăл ҫвинар мар,—комбайнер.

Хӗр:—Комбайнер пулса хура хăма ҫинче ҫакăнса тăриччен, ҫвинар пулса хӗрлӗ хăма ҫинче ҫакăнса тăрас.

Каччă:—Есӗ хаҗхи пурнăҫа ăнланмастăн, Машă! Мӗнле вăл техникăна сыснапа танлаштармала.

Хӗр:—Лизă сана качча пымасӑ. Епӗ ăна аван пӗлетӗп.

Каччă;—Мӗнле пымасӑ?

Хӗр:—Пӗлес тетӗн пулсан, ун хыҫҫăн икӗ агроном, пӗр фелдшӗр,—ăна тухтăрах темеле ӗнтӗ (*ассăн сывлаҫа*) тата МТС-ри аслă механик иккӗмӗш ҫул ҫӳреҫҫӗ... йулашки вăхăтра районри прокурор ăшшăн пăхкалаӑ... Куратăн-и сан Лизă мӗнлескер?

Каччă:—Мӗншӗн ытла нумай?

Хӗр:—Хӗрӗ ҫавнашкал.

Каччă:—Ытла хитре-и мӗн?

Хӗр:—Ман пек каҫăр сăмсалăскер.

Каччă:—Ҫамрăк-и?

Хӗр:—Мӗн ҫамрăкӗ ҫинчен калаҫмали пур? Май уйăхӗнче 22 тултараӑ.

Каччă:—Мӗншӗн вӗсем пурте ăна йуратса парахнă?

Хӗр:—Хӗрӗ ҫавнашкал.

Каччă:—Хаҗ кампа ҫӳрет?

Хӗр:—Лизă-и?

Каччă:—Ăхă!

Хӗр:—Никампа та ҫӳремест. „Никама та каймастăп". „Сирлӗр ман ҫумран, ман пуҫра урăхла план", тет.

Каччă: Мӗн ӗҫлет вара сирӗн Лизă? Правленинче лараӑ-и? Сысна ферминче ӗҫлет-и?

Хӗр:—Ҫук, вăл пӗчӗк ӗҫре. Сахăр кăшманӗ ӗҫӗнче звеновой.

Каччă:—Сахăр кăшманӗ ӗҫӗнче?. Сахăр пек пылак хӗр апла?

Хӗр:—Шăп сахăр пекех (*кулаӑ*).

Каччă:—Хӗрлӗ хăма ҫинче пулӗ-ха?

Хӗр:—Ҫапла пулмасăр тата.

Каччă:—Чыса тухнăскер апла?

Хӗр:—Ҫапла пулмасăр.

Каччă:—Пйатисотницăсенчен пӗри апла?

Хӗр:—Пӗри пулмасăр.

Каччă:—Гектарган 500 центнӗр сахăр кăшманӗ туса илет-и?

Хӗр:—Кăшт ытларах. Ултҫӗрӗшӗпех илет.

Каччă:—Мускава та кайнă пулӗ-ха?

Хӗр:—Кайнă ҫав.

Каччă:—Тен ордӗн та илнӗ пулӗ-ха?

Хӗр:—Ордӗн та илнӗ.

Каччă:—Ак йепле хӗр вăл?

Хӗр:—Сан хăвăнах пӗлме кирлӗ Лизă Карпăвăна, ăна пурте пӗлеҫҫӗ.

Каччă:—Ес ăна аван пӗлетӗн-и?

Хӗр:—Лизăна-и? Пӗлмесӗр, пит аван пӗлетӗп.

Каччă:—Апла, мана пырас ҫук вăл?

Хӗр:—Е-ех... Ваҫҫа! Ес ху шутласа ил-ха. Пйатисотницăсенчен пӗри, ордӗн илнӗ, икӗ агроном, пӗр фелдшӗр, аслă механик, прокурор пур... Есӗ хура хăмупа ҫыхланатăн.

Каччă:—Хамăн телей патне ҫитесси 32 километăр анчах йулнăччӗ, кайала таврăнмала пулчӗ пулас.

Хӗр:—Кайала таврăнас пулаӑ... Усси пулас ҫук Тăрăшсах йăнăшусене тӳрлет.

Каччă:—Тăрăшма кирлӗ-ши? Лизă сан пекех тетӗни-ха?

Хӗр (*кулса*).—Каснă - лартнă ман пекех... Мӗнле, асапланма хакне тăраӑ-и?

Каччă:—Е-ех!... Мӗнле асапланăттăм та...

Хӗр:—„Розă Лҗукҫембурга" кай та, хăвăн ӗҫна майлаштар, ку пӗрре, ытти бригадăсене те хăвăнпа танлаштар, ку иккӗ, хура хăма ҫинчен ан, ку виҫҫӗ, хӗрлӗ хăма ҫине кӗме тивӗҫ ил—ку тăваттă, унтан вара хӗр ҫураҫма кил,—ку пиллӗк.

**Каччă** *(кусĕ-пусĕ чалтăркаса кайнипе)*:—Ултçĕр... Гектартан ултçĕр центнĕр... *(Хастарăн)* Есĕ ăçтан Лизă çинчен пурне те пĕлетĕн?

**Хĕр**:—Мĕнле пĕлес мар-ха? Лизă текенни еп хам пулатăп вĕт.

**Каччă** *(тĕлĕнсе)*:—А,а „Машшă" кам вăл?

**Хĕр**:—Машшă тесе сана ахаль çеç каларăм... халь сывă пул, автобус çитрĕ... Совхоза кай та—ĕçле, хăвăн ĕçÿ мĕнле пыни çинчен мана çыру çырса тăр. Ачи пăхма аван-ха есĕ. Мĕн калăн, тен вăхăт çитсен ĕç тухма та пултарĕ...

*(Хĕр чупса тухса кайрĕ. „Вăтам йулса пыракан" комбайнер Çидăрăв чылайччен ун хыççăн пăхса тăчĕ те тарăнăн сывласа илчĕ).*

**Каччă**:—Станцине кайас пулать, кайала кайма билет илес пулать!

(*Вĕçĕ*).

**Т. Шерни куçарнă.**

## 5-ш страницăра ÿкернĕ картин вĕçĕ



— **Михал Федорович! Кунта сан çинчен çырнă.**

— **Тавай, шуйттан, тавай, тавай!..**

# МЕТĂД

Епĕ сана, хисеплĕ вулаканăм, Трак районĕнчи Мăн Шетмĕ йалсовечĕ мĕнле метăдпа ĕçленипе паллаштарасшăн. Çапла ĕнтĕ иксĕмĕр Мăн Шетмĕре.

— Турă хуплатăр ĕнтĕ сире, шалт аптăрарăмăр, кăçал хĕл каçиччен районран 100 уполномоченнăй йатăмăр пулĕ, анчах ĕç тухмасть. Ĕç метăдне пĕлместĕр пулĕ есĕр. Кашни квартăлра сирĕн 20—30 процент çеç. Пайанхи кун тĕлне есĕр районра 26-мĕш вырăн йышăнатăр. Мĕншĕн-ха есĕр ĕçлеместĕр? Мĕн çитмест сире?—йалсовет канцеляринe кĕнĕ-кĕменех харкашма тытăнчĕ Трак районĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ Игнатйĕв йулташ.

— Ĕçлетпĕр-çке!—ответлерĕ йалсовет председателĕ Петров йулташ.

— Да, есĕ ху килсе ĕçлесе пăх-ха кунта!—çинçерех сасăпа калаçрĕ çыруçи, кабинетне кĕрсе çухаличчен.

Счетовочĕ Александрăв чĕнмерĕ.

Сехет йĕппи 9 çине çитнĕ. Савăт труби кăшкăртсан ĕçлекенсем пухăннă пек, пухăнаççĕ йалсоветне ăшă кăмăллă кайăксем.

Йалсовет канцеляринe 7—8 хут çĕмĕрсе йусанă хыççăн кашнине пĕрер пÿлĕм тутарса вырнаçрĕç. Калăпăр, кашнин хăйне пÿлĕм. Пÿлĕмсенче чечексем, радио, хыçлă пукансем тата хытă дивансем. Калăпăр—культурлă канцеляри. Петров хăй пÿлĕмне кĕрсе ларсан пирус тĕпĕсене кăларса пăрахать, чечексен тăприсене тытса пăхать, типĕреххисене шăварать. Пирус чĕркесе ĕмме тытăнать. Пукансене ĕретĕн лартать, портретсене пăхса тухать, çтена çумне çыпăçтарнă плакатсене вуласа çавăрăнать. Каллех пирус чĕркет, каллех пирус чĕркет... Ку „каллех пирус" сăмаха Петров пĕр кун хушшинче миçе пирус туртнине пĕлес пулсан 191 хут каламала.

— Çĕнĕ хаçатсем!—кĕскен сăмах хушса Петров умне хаçатсем пăрахса пуштă агенчĕ кабинетран тухрĕ.

— Та-а-а-ак, редактăр Иванов вырăнне Александрăв заместитĕл ал пуснă... „Пĕр сурăх пÿтек тунă", „Ракетăри чĕрчунсем", „Пирĕн хроникă", „Шахмăт турнирĕ", „Курилкăри халăх сучĕ". Çук интереснă мар Шупашкар хаçачĕсем!—хушса хучĕ йулашки страницăна пăхса пĕтерсен Петров. Йалсоветне илсе пынă 7—8 тĕслĕ хаçатсене пăхса тухма Петрова 3—4 сехет кирлĕ пулчĕ. Халĕ ĕнтĕ апат çиме каймала, терĕ те, вăл канцелярtен йалпо лавкине тухса утрĕ.

Мăн Шетмĕ йалсоветĕнче кашни кунах çакă картинă, çакă тĕслĕх:

— Кивйал шкулĕнче „Ленин вăрманта тарса çÿренĕ чух ÿксе вилнĕ", тесе вĕрентеççĕ. Урок вăхăтĕнче класра чĕлĕм туртаççĕ. Кашни урок хыççăн сыпма шкапрах ерех усраççĕ. Йулташ Петров, мĕншĕн çаврăнса пăхмастăр ара шкул çине?

— Темле метăдпа çаврăнса пăхмала.

— Мăн Шетме йалсоветĕнче 76 çын хутла пĕлмест, 150 çын сахал пĕлет, ку йулташсем вĕренесшĕн хыпаланаççĕ. Йулташ Петров, ĕçе организацилеме учителсене пулăшăр-ха!

— Тахăш метăдпа пулăшмала.

— Патшалăха памали парăмсене парса татас тĕлĕшпе йалсовечĕ 2—3 çул пур ĕçпе те чăтма çук кайра пырать, мĕншĕн ĕçлеместĕр есĕр?

— Метăд тĕлне пĕлместпĕр-çке!

— Кĕпeрсем йатăнса анчĕç, çулсем çÿреме хăрушă, йусаттарăр-ха тархасшăн...

— Вĕсен метăчĕ çитмен-ха.

— Ох, метăд! Мĕн чул тăратăн-ши есĕ метăд, хăш хулари савăт шăратса кăларать-ши сана валли метăд?—Хуйхă айне путрĕç йалсовечĕн ĕçлĕ çынĕсем.

Районри организацисем те Мăн Шетмĕ йалсоветне ĕçлеттерме „метăд" тупса пама пĕлмеççĕ пулас.

**Шетмĕсем.**

# Квас ҫӑлчӗ

Граждӑнсем, есӗр темле, епӗ прорыва кӗрсе лартӑм. Арӑм тухса тарчӗ.

Тухса кайас умӗн: ача тӑватӑп, теме пуҫларӗ. Паллах ӗнтӗ, епӗ „ача-пӑча пурнӑҫ чечекӗ“ тенине пӗлетӗп, пурнӑҫ чечекне хирӗҫ мар. Анчах ӑна, тӗплӗнрех шухӑшласан, лайӑх ҫӗр ҫинче ӳстерес пулаҭ. Ман арӑм хыткан. Хытӑ ҫӗр ҫинче пурнӑҫ чечекӗ ӑҫтан лайӑх ӳсме пултараҭ? Ҫавӑнпа чечек тӑвас шухӑшпа килӗшмерӗм. „Есӗ мана кӑҫал ҫеҫ качча тухнӑскер тӗреклӗнсе ҫитейменӗн, хыткан, лайӑх чечек тӑваймӑн“, терӗм. Чечекрен хӑтӑлма пулӆницӑна хӑваласа йатӑм. Чӑпӑрккапа мар, рычакпа мар, сӑмахпа ҫапса хӑваласа йатӑм. Кайрӗ. Виҫӗ кунтан тавӑрӑнчӗ. Тавӑрӑнсассӑн калаҫу пулчӗ. Ӑна епӗ мӗнле сортлӑ сӑмахсем каланине ун чухне астӑватӑпчӗ. Халӗ астумастӑп. Астума та кирлӗ мар. Астунӑшӑн преми парас ҫук. Сивӗ калаҫу хыҫҫӑн вӑл хӑйне пурнӑҫ чечекӗ туса йанӑ амӑшӗпе пурӑнма кайрӗ. Хӑйпе пӗрле илсе килнӗ йапалисене пӗрне те хӑвармарӗ.

Манӑн характӗр уншӑн йӑвӑр пулнӑ, тет. Йӑваррине ӑҫтан пӗлме пултарнӑ-ха? Тараса ҫине хурса турттарса пӑхнӑ-шим?

Малала мӗн пулнине каласан, виҫӗ кунтан хула сатӗнче хӗрпе паллашни ҫине куҫас пулаҭ. Кунӗ илемлӗ пулни тата хам отпускӑра пулни унпа паллашма май пачӗ. Хӗрӗ ман ҫинеле темле куҫ хӳрипе питӗ тутлӑн пӑхаҭ, епӗ те ун ҫинеле куҫа ачашшӑн курӑнакан туса пӑхатӑп.

Сехете йахӑн каласса ларнӑ хыҫҫӑн: мана качча тухатӑн-и?—терӗм. Тухмастӑп,—терӗ. Ма тухмастӑн?—терӗм. Хӗр качча тухмасҭ, пыраҭ,—терӗ. Мана чуп туса илчӗ. Ун пек тутлӑ чуптума арӑм пӗлмесчӗ. Пырас кӑмӑлу пулсан, кайар еппин,—терӗм. Ӑҫта?—Хамӑр мӑшӑрланни ҫинчен патшалӑха пӗлтерме.

Хӑрах хулӗнчен ҫаклатрӑм. Сатран илсе тухрӑм. ЗАГС-а утатпӑр. Квас киоски тӗлне ҫитрӗмӗр. Мӑшӑрланнӑ йатпа квас ӗҫес, терӗмӗр.

Квас ӗҫнӗшӗн укҫине уншӑн та, хамшӑн та тӳлес тесе шухӑшласа, ӑна квас будки патне илсе пытӑм. Ӗҫес текенсем питӗ нумай. Кунӗ шӑрӑх кун та, мӑшӑрланас теменнисем те, пирӗн пек, квас ӗҫме пынӑ. Пӗр-пӗрне тӗртсе мала тухсах ӗҫеҫҫӗ. Епӗ те икӗ мӑнӑ кружкӑшӑн 26 пус вак укҫа хатӗрлесе ал чӑмӑрӗнче тытатӑп. Квас сутаканӑн сӗтелӗ пекки ҫине укҫа хурса пама хӑтланап,—манран малтан тепри укҫа хурса параҭ. Укҫа хунӑ хыҫҫӑн, паллах, квасне вӑл ӗҫет, епӗр мар. Епӗ каллех укҫа хума тытӑнатӑп,—манран малтан тепри хурса параҭ...

Ҫапла темиҫе минут хушши хӑтланса тӑнӑ хыҫҫӑн, пулас арӑм мана: ма хурса памастӑн, ара, тет. Епӗ: куратӑн пулӗ-ҫке, тетӗп. Вӑл: куратӑп ҫав, тет. Епӗ: мӗне куратӑн, тетӗп. Вӑл: есӗ мӗшӗлтетнине куратӑп, тет. Мӗнле мӗшӗлтетнине?.. Сӑмах хыҫҫӑн сӑмах. Пулас арӑмпа йатлаҫсах кайрӑмӑр.

Йулашкинчен вӑл: есӗ ниме йурӑхсӑр, тет. Епӗ: есӗ ниме йурӑхсӑр,—тетӗп. Вӑл: есӗ!—тет. Епӗ: есӗ!—тетӗп.

Квас ӗҫме пӑрахсах халӑх пирӗн ҫине пӑхаҭ. Бакалей магазинӗнчен тухакансем те, иртсе пыракансем те епӗр мӗнле йатлаҫнине курма пухӑнчӗҫ (тупнӑ камит!). Ҫур плошчӗд пире куракан халӑхпах тулчӗ. Автомашинӑсем те иртсе кайма ҫул тупайми пулчӗҫ.

Милици шӗхличӗ сассине илтсен, халӑх хушшипе шӑлӑнса ҫухалтӑм. Тарман пулсан, протокол кӗнеки ҫине ӳксе намӑс курмала пулаччӗ. Унтан вара та курман ҫав хӗрарӑма.

Вӑл усалскерпе хам та ара мӗнле ҫыхланса кайма пӗлнӗши? Квас ӗҫмен пулсан, регистрациленсе килеттӗмӗрччӗ вӗт! Квас ӗҫни ҫӑлчӗ.

Халӆ квас киоскине курсассӑнах ҫӗлӗке илсе пуҫа тайса, „тавсийе“ сӑмахсем каласа пӑшӑлтатса иртсе кайатӑп. Ҫавӑнпа ӗнтӗ есӗр, мӑшӑрланма шухӑшлакан граждӑнсем, ҫырӑнма сӑмах татнӑ хыҫҫӑн, ЗАГС-а каймали ҫул ҫинче ларакан киоскӑран квас ӗҫӗр. Ахалӗн пулас арӑмӑн ӑсӗпе кӑмӑлне сӑнама вӑхӑҭ пулмӗ. Ахалӗн ҫырӑнса ЗАГС-ран тухнӑ хыҫҫӑнах кайала уйӑрӑлу хучӗ илме каймала пулӗ. Пулмӗ теме ҫук, йулташсем, ҫу-ук!

Иван Мучи.

---

## Сӑлтавӗ пур

В. А. Филиппӑв ӳкерчӗкӗ.



— Йакӑвлӗв, есӗ мӗншӗн вӗренме пӑрахсах коӊухра ӗҫлетӗн?

— Вӗрентекен пӗр кун: ӳлӗм коӊухсем те вӗреннӗ ҫынсенчен пулаҫҫӗ, терӗ те, ыттисем вӗренсе тухса пыриччен часрах хам кӗрсе йулас терӗм.



# Кулас килет

## Пурăнма васкакан.

Фотограф патĕнче халĕ çеç авланнă çынпа арăмĕ сăн ÿкереççĕ. Авланнă çынни сăн ÿкерекенрен ыйтать:

— Халĕ ÿкернĕ фотокартăчкăсене хăçчан хатĕрлесе паран?— тет.

Сăн ÿкерекен калать:

— Виç ернерен,—тет.

Упăшки сăн ÿкерекене тархасласа калать:

— Хăвăртрах май килмест-и?— тет.

— Ма?

— Виç ерне хушшинче епĕ ку арăма уйăрса йама пултаратăп,— тет.

## Çурма тăлăх ача

— Аван ача пулмала ку. Тăнлă. Пуплеме пултараканскер ăнланма та пултарассăн туйăнать. Ей, шăхличĕ, кам ачи есĕ?

— Ăçтан пĕлетĕп. Анне никамран та алимент илмест те, хам кам ачи пулнине калама пĕлместĕп.

## Шиклĕ шикленнĕ

— Кунта акă: „Çумкурăксем чечеке ларасса кĕтеççĕ“ тесе пысăк саспаллисемпех статйа çырнă.

— Ну?! Апла пулсан пирĕн колхоз çинчен пуљ. Вуласа тух-ха.

## Хăш-пĕр парикмахĕр патĕнче

— Есĕ мана ним вырăнне хурасшăн мар. Мĕн пирки епĕ йун тăкнă?

— Мĕн ĕçлесе пурăнатăн есĕ

— Парикмахĕр—пирĕн ĕçре хăçан та пулсан йун тăкăнатех? ĕнтĕ.

## Трак районĕнче

Промертелсем ăçта та пулсан умываљниксем сахал кăлараççĕ пулсан, промкоопераципе йалсобетсен вăл ĕçе тÿрлетсе йамала (И. Д. Кузнецов статйинчен)

— Пирĕн районра ма ниçта та умываљник сутни курăнмасть?

— Промкооператси лайăх ĕçлени курăнманран.

## Сутра

Сутйе: — Корнейĕв Васили, стрелочник, хăйĕн ачине тăрантарма укçа тÿлеменшĕн айăпланать.

Айăпланакан: — Килĕшместĕп. Авалхи майлă айăплама шухăшлатăр. Авалхи вăхăтра: кирек хăçан та стрелочник айăплă, тетчĕç.

## Ытти интереса пĕлмен ача

Ашшĕ ачине вăрçать:

— Çавна та пĕлместĕн. Сана хулпуççи çине мĕнпĕн пуç лартса панă?

— Футболла выљама. Мечĕке кайала çапса йама,—тет.

## Усăлă канаш

Трахома пĕтерес тесен, куçа таса тытмала. (Тухтăрсен сăмахĕнчен).

— Пит-куç кирек хăçан та тасан курăнтăр тесен мĕнле йышши емел сĕрмеле?

— Ир те каçăн супăньпе çумала.

## Куçĕсем

Шупашкарти Пичет çуртне туса пĕтериччех çтенисене, урайĕсене, алăксене ремонтламала пулнă.

— Ку çурта миçе çул турăр, турăр, халĕ туса пĕтеричченех ремонтлама тытăнтăр. Сирĕн строительсен куçĕсем ăна тунă чухне ăçта пулнă?

— Куçĕсем вĕсен хăйсен вырăнĕнчех пулнă та, анчах вĕсем ĕç çине мар, кăльтăр-кальтăр ĕçлесех укçа илесси çине пăхнă.

## Йапăх столовăйра

— Е е-е! Пирĕн столовăйра заведуйушчисем мĕнле час та часах улăшăна-улăшăна пыраççĕ, ара!

— Ун вырăнне менÿ нихăçан та улăшăнмасть.

## Икĕ магазин

Икĕ ача калаçаççĕ. Иккĕшĕнчен пĕри--Кољă йатли--совет пионерĕ, тепри—Ганс йатли—Германи çĕршывĕнчен килнĕ ача.

**Ганс.** Сирĕн хулари чи пысăк магазин миçе хутлă?

**Кољă** ултă хутлă.

**Ганс.** Вăл магазинра сутса тăракансем миçе çын?

**Кољă.** Шутласа кăлараймăн. Пит нумайăн. Сирĕн хулари чи пысăк магазин миçе хутлă тата?

**Ганс.** Пирĕн хулари чи пысăкки вунă хутлă.

**Кољă.** Вăл магазинра сутса тăракансем миçен?

**Ганс.** Пĕр çын.

**Кољă.** Мĕнле пĕчченех вăл мĕн пур ĕçе туса çитерме пултарать?

**Ганс.** Мĕн пултармала марри пур унта. Алăк патĕнче кашни пыракан çыннах: „продуктăсем магазинра çук“ тесе çеç тăрать.

## Урапа пушарĕ

Çверчков ÿкерчĕкĕ.

Чăваш Сурăмĕнчи (Елĕк районĕ) „Çурлапа Млатук" колхозра уйа навус турттарнă чух, тикĕт виçĕ кун сĕрменнипе, урапа тивсе кайнă. Çунса çур тĕнĕле çитнĕ. (Терентйĕв).



— **Мĕнле капла, хĕвел купарчаран пĕçертме пуçларĕ...**

*ИВАН МУЧИ*

# Çĕртрен тупнă хутсем

*Çемен тусăм! Ĕсĕ манăн мĕн пур туссенчен те çывăх тус. Манăн санран çыру урлă çакна ыйтассăм пур.*

*Калас пулаť, манăн хватерте Аннă Васçилйĕвнă пурăнаť. Вăл маншăн кам пулнине хам пĕлместĕп: те арăм пулаť, те арăм мар, хурăнташ тесен—хурăнташ мар, арăм тесен — арăм мар. Простă Аннă Васçилйĕвнă темеле пулĕ ăна.*

*Иртнĕ уйăхра çав «простă Аннă Васçилйĕвнăна», вăл йăвăр çын пулнине кура, епĕ пĕрре питĕ хĕрхентĕм: ача çуратма ман хватер пысăкках мар тесе, аслăрах хватер шырама пуçĕпех кăларса йатăм. Ман хватертен тухса кайсан икĕ ерне иртсен çав «Простă Аннă Васçилйĕвнăн» ача çуралнă. Ачин куçĕсем манăн пек хура мар тет, кăвак тет. Кĕлетки те манăн пек мăнă мар, тет, пĕчĕкçĕ, тет. Анчах ачин сăмси каснă-лартнă ман сăмса пекех, тет. Çав сăмсашăн манăн мĕн чухлĕ алимент тÿлемеле пулаť? Пĕтĕм ÿт-пĕвĕшĕн хам илекен шалун 4-мĕш пайне тÿлеттереççĕ, сăмсишĕн мĕн чухлĕ тÿлеттерессине пĕлейместĕп.*

*Йулташлă салампа*

*ПЕТĔРМЕЙКИН.*

**
*

*Маничка! Пирĕн хаљхи техникăпа машинизаци тапхăрĕнче епĕ машинисткăсене ытларах йурататăп. Çавăнпа сана епĕ йуратнипе-йуратманни çинчен отношени çырса йамасăрах пĕлме пултаратăн. Сан патна епĕ иртнĕ ернере йанă 32-ш номĕрлĕ цыркуљарлă çыруři кăтартусене пурнăçа пĕтĕмĕшпех кĕртсе çитерес тĕлĕшпе, есĕ çакă 36-мĕш номĕрлĕ отношенине илнĕ кунах, хырăма йулнă ачаран хăтăлмашкăн операци тутарма кайасса шанатăп. Çак каланине есĕ пурнăçлаймасассăн, иксĕмĕр хушăра халиччен пулнă йурату прорыва кĕрсе ÿкме пултараť. Комиççине кăтартмали хутне хамах хатĕрлерĕм.*

*Çут тĕнчене курмасăрах пĕтекен ачушăн куљаннă чухне тухас куççуљ тумламĕсене типĕтме, промакашкă йаратăп.*

*Пуљницăран тухсан, ĕлĕкхи пекех пĕр-пĕрне савса пурнас ĕмĕтпе, сана пит çемçен ачашлама йуратакан алăпа алпусатăп*

*М. ХЛЫЊЕВСКИЙ.*

**
*

*Сансăр пурнăç — «нуљ». Санпала — «положительная величина» пулĕ. Тÿрĕ йĕр (прямая линия) — икĕ пăнчă хушшинчи чи кĕске çул пулса тăраť, — çавăнпа тÿрех калатăп: есĕ манăн йуратнă гипотенузăм пулмăн-ши? Епĕ сана лайăх пăхса усрасси—саншăн акçиомă пултăр. Мăшăрланас теоремăна иксĕмĕр хушăра татни çинчен ЗАГС тенĕ учрежденире регистрацилеме кирлĕ мар, мĕншĕн тесен математикă величинисем регистраци тусан та, тумасан та пурĕ пĕрех ним улшăнми пурăнаççĕ.*

*Математик Ив—в.*

А. П. Чехǎв

# Йалти емелçĕсем*)

Земствǎ пулници. Ир.

Становойпа ухутана кайнǎ тухтǎр вырǎнне, чирлисене хвершǎлсем йышǎнаççĕ: Куçма Йегорǎвпа Глеб Глебǎч. Чирлисем вǎтǎр çынна йахǎн. Куçма Йегорǎв, чирлисем çырǎнса тухассине кĕтсе прийомнǎйĕнче цикори кофĕ ĕçсе ларать. Глеб Глебǎч, мĕн çуралнǎранпах пит-куçне çуманскер, çǔç-пуçне тураманскер, кǎкǎрĕпе тата хырǎмĕпе сĕтел çинче выртать, çилене-çилене илет те чирлисене çырать. Çырассине статистикǎ валĕçи çыраççĕ. Чирлин йатне, ашшĕ йатне, хушаматне, вǎл мĕнле ĕçпе, ǎçта пурǎннине, хут пĕлнипе пĕлменнине, çулĕсене, кайран, ǎна пахнǎ хыççǎн, вǎл мĕнпе чирлине тата ǎна мĕнле емел панине çыра-çыра пыраççĕ.

— Ку пересем мĕнлине шуйттан пĕлет-и тен!— пысǎк кĕнеке тата пĕчĕкçĕ хут листисем çине тĕлĕнмеле „азбукисем" йĕрлесе ўкернĕ хушǎра çиленсе илет, Глеб Глебǎч. — Мĕнле чернил ку? Чернил мар, тикĕт ку. Тĕлĕнетĕп епĕ вǎл земствǎран. Чирлисене çырса пыма хушать, чернилне илмешкĕн çулталанǎка икĕ пус укçа парать.—Кунта кил!—кǎшкǎрать вǎл.

Пит-куçне чǎрканǎ мужик тата Михайло „бас" пырса тǎраççĕ.

— Мĕнлескер есĕ?

— Иван Микулǎв.

А? Мĕн? Вырǎслах кала.

— Иван Микулǎв! Санран ыйгмастǎп. Айаккала кайса тǎр! Есĕ! Мĕн йатлǎ?

Михайло кулкаласа тǎрать.

—Пĕлместĕн-им вара?—ыйтать вǎл.

— Ма кулатǎн? Мĕнле шуйттанла есĕр? Çынни йерçеймест, вǎхǎчĕ хаклǎ тǎрать, вĕсем мыскара тǎвассипе. Йату мĕнле?

— Пĕлместĕн-и мĕн? Сĕрĕм тиври?

— Пĕлетĕп, анчах манǎн ыйтасах пулать, мĕншĕн тесен йĕрки çавǎн пек... Сĕрĕм—нимрен те тивмели çук-ха. Сан пек ўсĕр çўреместĕп. Ĕçкĕсĕр пурǎнайман çын мар...Йатупа хушамату?

— Ху пĕлсе тǎнǎ хушǎрах сана мĕн тума калас? Пĕлни пилĕк çул...Улттǎмĕшĕнче мантǎн-и мĕн?

— Манман, анчах йĕрки çавǎн пек. Ǎнланатǎн-и? Йе вырǎсла каланине ǎнланаймастǎн? Йĕрки!

— Йĕрки апла пулсассǎн, санпала еппин шуйттан пултǎр! Çыр! Михайло Федорович Измученко...

— Измученко мар, Измученкǎв.

— Измученкǎв пултǎр еппин. Мĕнле çырсан та, сыватса йар анчах... Шут Иванǎч те хǎть... Пурĕпĕрех...

— Мĕнле сослови?

— Бас.

— Миçе султа?

— Кам пĕлет.

— Пĕр хĕрĕхре пур-и?

— Тен, пулĕ те, тен ун чухлех те пулмĕ... Мĕнле кǎмǎл пур, çавǎн пек çыр.

Глеб Глебǎч пĕр самантлǎха Михайло çине шухǎшлǎн пǎхса илет те, 37 тесе çырса лартать. Унтан шухǎшласа илнĕ хыççǎн 37—не хуратса 41 туса хурать.

— Хут пĕлетĕн-и?

— Певчи хут пĕлменни пулать-и? Ех, пуçу!

— Санǎн мана çынсем умĕнче „есĕр" тесе чĕнмеле, ун пек кǎшкǎрмала мар. Тата кам унта? Мĕнлескер есĕ? Мĕн йатлǎ?

— Пуголов Микихвǎрĕ, Хапловǎран.

— Хапловрисене сиплеместпĕр. Ун хыççǎн кам? Айаккала кайса тǎр! Кунта чĕлĕм ан туртнǎ пултǎр!

— Еп, Глеб Глебǎч, туртмастǎп.

— Апла аллунта мĕн санǎн?

— Ку манǎн, Глеб Глебǎч, пўрнене çыхса йани.

—Пирус мар-и? Хапловрисене йышǎнмастпǎр.

Глеб Глебǎч çырса тухассине пĕтерет, Куçма Йегорǎч кофĕ ĕçсе тǎранать, чирлисене пǎхса тухасси пуçланса кайать. Лешĕ хǎй çине фармацевт пайне илсе— аптекǎва кайать, ку терапевт пайне илсе клейонкǎ саппан çакса йарать.

— Марйǎ Заплакçинǎ,—кĕнеки тǎрǎх чĕнет Куçма Йегорǎв.

— Кунта, ырǎ çынǎм!

Прийомнǎйне темиçе кукǎр хуçкаланса пĕтнĕ асат хуçнǎ пек пĕкĕрĕлсе ларнǎ пĕчĕкçĕ карчǎк кĕрет. Вǎл сǎхсǎхса илсе тухтǎр пулнисене хисеплесе пуçне тайать.

— Кхм...Алǎкна хуп! Мĕн ыратать?

— Пуç, ырǎ çынǎм!

— Апла пултǎр...Пĕтĕмпех-и йе çурри анчах?

— Пĕтĕмпех, ырǎ çынǎм...мĕн пур таран пĕтĕмĕшпе.

— Пуçна апла чĕркесе ан çўре...Ку çĕтĕк-çатǎкна салт! Пуç сивĕре, ура ǎшǎра, кĕлетке вǎтам климǎтра пулма кирлĕ. Вар ыратнипе аптратни?

— Аптǎратǎп çав, ырǎ çынǎм!..

— Апла пултǎр...ну кǎ, айалти куç хупаххинчен тытса турт-ха! Йурать, çитĕ! Санǎн йун сахал...Еп сана тумламсем парам...Ирхине, кǎнтǎрла касхине вуншар тумлам...

Куçма Йегорǎв ларса рецепт çырать.

„Rp Liquor ferri 3 гр. леш, чўрече çинче тǎраканнине; çўлĕк çине хунине хǎйсĕр усма хупман вуншар тумлам кунне виçĕ хутчен Мариа Заплакçинǎна".

Карчǎк емеле мĕн çине тумлатса ĕçмели çинчен ыйтать, пуçне тайса тухса кайать.

Рецептне Куçма Йегорǎв çтенана касса тунǎ, пĕчĕкçĕ чўрече витĕр пǎрахать те, тепĕр чирлĕ çынна кĕме чĕнет.

— Тимофей Стукотей!

— Кунта.

Прийомнǎйне катаран пǎхсан мǎнǎ чǎмǎр вĕçлĕ туйа пек курǎнакан çинçе те вǎрǎм Стукотей кĕрет.

*) А. П Чехǎв ку произведенире патша Раççийĕнчи земствǎ пулǎницисенче халǎха сыватас ĕçе мĕнле йĕркепе туса пынине тата халǎх ун чухне мĕн тери тĕттĕм пулнине сǎнласа парать.

— Мӗн ыратать?

— Чӗре, Кусма Йегорăч!

— Хăш тӗлтен?

Стукотей кăкăр шăмми айне кăтартать.

— Апла...Тахсантанпах-и?

— Мункунтанпах...Пасăр суран утрăм, пӗр вунă хут пулӗ ларса кантăм... Шăнтать, Кусма Йегорăч! Пӗсертсе пăрахать, Кусма Йегорăч!

—Хм... Тата мӗн ыратать?

—Тӳррипе каласан, Кусма Йегорăч, пурте ыратать, анчах есӗ ыттипе ан асаплан, чӗрене кăна йусаса йар. Ыттисене карчăксем те сиплӗс. Чӗре патне капланса пырса тухмала ан пултăр тесе есӗр мана пӗр·пӗр йышши спирт илме сырса парăр. Чӗре патне капланнă семӗн капланса пырать те, кайран ак сак тӗлеле ыраттарса кайса чăтма та памасть... Сурăмран туртать...Пусра чул пур пекех пулать... Ӳслӗкӗ те...

— Аппетит пур и?

— Ним чухлӗ те сук.

Кусма Йегорăвич Стукотей патне пырса тăрать, ăна мăйӗнчен тытса пӗкӗрӗлтерсе хурать те, унăн кăкăр шăми айӗнчен чышкипе пусать.

— Капла тусан ыратать-и?

— Ой... ой...ввв...Ыратать!

— Ак капла тата, ыратать-и?

— Ввв... Вилӗм!

Кусма Йегорăв тата темисе ыйту парать, шухăшласа илет те хăйне пулăшма Глеб Глебăча чӗнет. Консилиум тапранать.

— Чӗлхӳна кăларса кăтарт-ха!—тет Глеб Глебăч, чирлӗ сын йеннеле пăхса.

Чирлӗ сын săварне сарлакан усса чӗлхине кăларса йарать.

— Ытларах кăлар!

— Ытларах тухмасть, Глеб Глебăч!

— Ку тӗнчере темӗн тума та май пур.

Темисе самант хушши Глеб Глебăч чирлӗ сын сине пăхса тăрать, темӗн синчен пит асапланса шухăшлать, хулпуссисене сиккелентерсе илет те, нимӗн чӗнмесӗрех прийомнăран тухса кайать.

— Катарр пулмала!—кăшкăрать вăл хăйӗн апте кинчен.

Olei ricini тата ammonii causici парăр ăна,—кăшкăрать Кусма Йегорăв.—Ирӗн-касăн хырăмна сăтăрса шăлмала. Тата кам унта?

Чирлӗ сын прийомнăйран тухса каридортан аптека тухакан пӗчӗксӗ чӳрече патнеле утать. Глеб Глебăч чей стаканӗн виссӗмӗш пайне касторкă йарса хурса Стукотейе парать. Стукотей васкамасăр ӗссе йарать, тутисене суласа илет, кусӗсене хупса пӳрни сумне пӳрнине хурса сăптăрса кăтартса тата мӗн те пулин сыртмали кирлӗ пулнине систерет.

— Саншăн ку спирт мар!—тесе кăшкăрса калать ăна Глеб Глебăч, ăна нашатыр спирчӗ тултарнă пӗчӗк кӗленче тыттарса.—Хырăмна ирӗн те касăн пусма татăкӗпе сӗркеле... Посудине кайала тавăрса пар. Чавсаланма йурамасть. Айаккала кайса тăр.

Тутине мăн тутăрпа хупласа кулкаласа, Григори аттен кухарки Пăлаки пӗчӗксӗ чӳрече умне пырса тăрать.

— Сире мӗн кирлӗ?—ыйтать Глеб Глебăч унран.

— Глеб Глебăч, сире Лизаветă Григорйӗвнă салам каласа йачӗ, мйатнăй лепйошкă парса йама ыйтрӗ.

— Пит хавас-ссс...Илемлӗ хӗрарăмсемшӗн кирек мӗн тума та хатӗр!

Глеб Глебăч сӳлӗк синчен мйатнăй лепйошкă тултарнă банкăна кармашса илет те, сур банкине Плаки тутăрӗ сине йарса парать.

— Калăр ăна,—тет вăл:—Глеб Глебăч лепйошкине панă чухне кăмăлӗ хаваслаиншпе йăл та йăл кулса илчӗ те. Сырува илнӗ-ши вăл?

— Илчӗ те сӗтсе тăкрӗ. Лизаветă Григорйӗвнă йуратупа аппаланмасть.

— Мӗнле гризеткă вара вăл. Калăр ăна—вăл гризеткă.

— Михайло Измученков!—тесе кăшкăрса кӗме хушать Кусма Йегорăв.

Прийомнăйне Михайло „бас“ кӗрет.

— Михайло Федогыча! Манран салам! Мӗн ыратать?

— Пыр, Кусма Иегорăч! Сан патна епӗ, тӗрӗссипе каласан, санăн кăмăлу пулсан, ман сывлăх пирки есӗ... Ытлашши тăкаклă ан пултăр...Чир пиркийех йурлама пултараймастăп, регӗнт кашни кăнтăрлахи кӗлӗшӗнех хӗрӗхшер пус укса тытса йулать. Касхи кӗлӗшӗн ӗнер четвертак тытса йулчӗ. Пайан улпут панихидă тутарнă, йурлакансене висӗ тенкӗ панă, ман тӳпе чир пирки нимӗн те тухман. Санăн кăмăлу пулсан, пырăм пирки сире сакна калама пултаратăп: вăл ытла хырăнса хăрăлтатакан пулчӗ. Пыра темӗскер кушак аси кӗрсе ларса урисемпе темӗскер тунă пек ..Кхм...Кхм...

— Вӗрилентерекен ӗсмелисем пиркийех савăн пек пулӗ вăл?

— Чирӗм мӗн пирки пулни синчен калама пӗлместӗп, анчах, кăмăлу пулсан, вӗрилентерекен ӗсмелисем вӗсем тенăрсене сийен кӳрессӗ, бассене нимӗн чухлӗ те сийен кӳреймессӗ, теме пултаратăп. Бас вăл, Кусма Йегорăч, ӗскеленӗ хыссăн, săрарах, мăнăраххăн илтӗнекен пулса кайать. Баса ытларах простудă сийен кӳрет.

Чӳречерен Глеб Глебăч пусӗ тухса тăрать.

— Карчăка мӗн парас?—ыйтать Глеб Глебăч.—Чӳрече синчи тимӗрӗ пӗтнӗ. Сӳлӗк синчине илсе усас-и?

— Сук, сук! Иван Йакăвлӗвич хушман. Силенӗ.

— Мӗн парас вара ăна?

— Мӗн те пулин.

Глеб Глебăч чӗлхи „мӗн те пулин“ парас тени „содă парас“ тени пулать.

— Вӗрилентерекен ӗсмелисене ăша илме йурамасть.

— Епӗ халӗ те висӗ кун ӗнтӗ ӗсместӗп. Ман вăл простудăран...Чăнах, баса ерех хăрăлтатакан тăвать, анчах хăрăлтатуран октавă пулать. Кусма Йегорăч, есӗ пӗлетӗн, луччă...Ерехсӗр ман пеккисене йурамасть... Мӗнле певчи пулать вăл ерех ӗсмен сын. Певчи мар, есӗ ирӗк панă тăрăх, ирони сес пулса тăрать вăл. Ун пек вырăнта пулмасан, епӗ—ăна, ылханлăскерне, săвара хыпас сук. Ерех вăл шуйтан йунӗ...

— Акă мӗн... Епӗ сана порошок парам. Есӗ ăна бутылкă ăшӗнче ирӗлтер те, касхине те, ирхине те пырна чӳхе.

— Сăтма йурать-и?

— Йурат҄.

— Пит аван...Ҫăтма йураман чухне пит тарăхтарат҄. Чӳхетӗн-чӳхетӗн, сурса пăрахатăн — шел вӗт! Сиртен епӗ ака мӗн ҫинчен, калас пулсан, ыйтса пӗлесшӗнччӗ... Вар хырăм начартарах та, ҫавăн пирки, санăн кăмăлу пулсан, кашни уйăхрах хам ăша йун йаратăп тата курăк шывӗ ӗҫетӗп, ҫапла пурăннă хушăра манăн саккун йӗркипе авланма йурат҄-и?

Куҫма Йегорăч темиҫе самант хушши шухăшласа тăрат҄ те, калат҄:

— Ҫук, авланма хушмастăп.

— Чӗререн тав сире...Пирӗншӗн аван сиплевҫӗ есӗр, Куҫма Йегорăч! Пур тухтăрсенчен те лайăхрах! Тупата! Миҫе чун саншăн турра пуҫҫапат҄ пулӡ! И-и-и! Пит нумай!

Куҫма Йегорăв йăвашшăн куҫӗсене антарат҄ те хăйулăн Natri dicar donici, тепӗр майлă каласан сода илме ҫырса парат҄. Мами куҫарнă.

# Кахал хуйхи



— Мӗнле пурнан?
— Виҫӗ сехетчен аван, виҫӗ сехет иртсен — начар.
— Виҫӗ сехет иртсен мӗа начар?
— Виҫӗ сехетре ӗҫлеме тухатăп.

# Виçесĕр вăхăтсем

„Виçе", „вăхăт" çинчен ăнлантармастăп епĕ. Вăл сăмахсем темле йут патшалăхран куçнă сăмахсем мар, такам та пĕлет. „Виçе" тесен темле çын та метр, килограм, литр тата ытти виçесем çинчен аса илет.—Мĕн калаçмали пултăр ун çинчен, виçе-тăк виçе. Виçе вăл пуриншĕн те пĕрех, метр такамшăн та метр. литр та çавах,—тейĕр есĕр. Çук, тĕрĕс мар. Тӳрех калатăп, йышăннă виçесемсĕр пуçне кашни çынăн тата хăйне майлă виçесем пур. Акă сан умра пиянцă. Есĕ ăна—çеђодкă пулă Шупашкарти Бакалей лапкинче 5 тенкĕ те 20 пус тăратӑ тесен, вăл сана ним шутламасăрах çапла калатӑ: тата 80 пус хушсан шăп çур литр килет, тет. Шалу илме йуратаканни пур йапалана та хăйĕн шалăвĕпе виçет. Лапкари прейскурант çинче 5 тенкĕ тăни вырăнне чĕрсе „сатин метăрĕ 5 тенкĕ те 10 пус" тенĕ пулсан, „çуркунхи шалу çумне тата 10 пус хушмала" тет вăл. Ман асанненех илер. Вăл пур йапалана та çăмартапа виçет. Краççин-и спичкă-и, супăђ-и, кулач-и--пурте çăмартапа: ку пилĕк çăмарта, ку икĕ теçетке, тет.

Çапла ĕнтĕ, виçе пĕр мар, кашнин хăйĕн. Камăн мĕнле виçе? Каласа пĕтерме çук камăн мĕнле виçине. Хăш-пĕр прикашчиксен, буфетчицăсен виçисем йаланпа пĕрех саккун йышăннинчен кĕскерех пулаççĕ. Метăрта вĕсен ыттисенни пек 10 дециметр мар, пĕрре катăк—тăххăр. Литр та çавах, пĕр децилитр пĕчĕкрех. Куратăр ĕнтĕ вĕсен виçесем пĕр пекрех, пĕчĕкрех. Есĕр каллех ĕненмĕр-ха. Ман сăмаха тĕрĕслес тесен Атăл хĕрринчи киоскă патне пырса виçĕ крушкă квас ил. Киле пырсан, литăрпа виç, виç крушкăран шăп литр пулатӑ, кашни крушки çур литр. Вара есĕ тӳрех пĕлĕн виçесем мĕнле тĕслĕ пулнине. Йе кай буфета, пристăнђа, йе пĕр-пĕр лапкана, ил мĕн те пулин çур килограм, пачах ан тăк, тепĕр лапкана кĕрсе виçсе пăх. Вара ун чух килограм килограмран пĕчĕкреххине каллех тупма пултарассăн туйăнатӑ (кашнинче мар та).

Виçе тени виçекенĕн алăсталăхĕнчен те нумай килет. „Ловкость рук" тени кунта та питĕ кирлĕ иккен. Хăш-пĕрисен çакăн пек халап пур: мĕн тери прикашчик алли хăвăртрах ĕçлет, çав тери виçе пĕчĕкрех пулма пултаратӑ. Пит хăвăрт сутакан прикашчик (нимрен ытла черет пур чух) килограмран çур килограм ытларах çеç тума пултаратӑ, метăра пĕр-икĕ дециметăр таран кĕскетет, теççĕ. Тĕрĕс мар. Виçе пĕчĕкленесси прикашчик алли хăвăрт ĕçленинчен килмест.

Акă мĕнле! Тавара тараса çатми çине ывăтатӑ, вара таварĕ (тĕслĕхрен воблă пулă тейĕпĕр) çатмана пырса перĕнме ĕлкериччен çулса тытса чĕркесе те паратӑ. Йе çатма лапчăнасран хăрамасăрах тавара çӳле йатса мĕн пур вăйпа пăрахатӑ те, тавар ӳкнĕ çатма çисĕм пек йалкăшса анса кайнă вăхăтра илет. Ун пек чух илекен те кăмăллă пулатӑ, „прикашчик тĕрĕс çын, похотлă пачĕ" тет. Çапла пулин те виçе пĕчĕкрех.

Анчах та есĕр пачах ан шухăшлăр, епĕ хăвăрт ĕçлекен прикашчиксене хирĕç тесе. Çук! Епĕ вĕсене тата хăвăрт ĕçлеттересшĕн, анчах та пĕр килограм йăвăрăшĕ—килограм, метăра—метр тăршшĕ тăвасшăн.

Çавнашкалах укçа-тенкĕн те виçи пур. Прикашчиксем, столовăйсенче апат паракансем сайра сана 1, 2, 3 пус тавăрса параççĕ. Пĕр хутаç 1, 2, 3 пус йăванса выртатӑ пулсан та, вăл сана каçарăр ман сана 1 пус кайала çук" тет те, ăшă кăмăлăн, сана вăл чĕререн савса йуратнă пек кулса илет. Шарламастăн вара. Мĕн, виçе темерĕн-и есĕ ăна? Унăн та виçи пур.

Вăхăт виçи те тĕрлĕрен. Вăхăта хăшĕсем йавлени вăрăмăшĕ теççĕ. Ан тив, пултăр, хутӑ те мĕнле пултăр, кирек те мĕнле ĕçĕн йăвăрăшне пĕлтертĕр. Анчах вăхăт та пĕр мар. Вăхăт вăл хут купăс пек чăсăлма та, лапчăнма, хĕсĕнме те пултаратӑ.

Вăхăт пуриншĕн те пĕрре: кун, сехет, ерне, уйăх, çулталăк,—темеле есĕр тавлашма йурататтăрах пулсан.

Акă ĕнтĕ, стаханăвцă уйăхлăх панă плана вунă кунра тултаратӑ, Ваçлейĕн вăл 1 уйăх та ернене тăсăлатӑ. Ăçтан вара уйăх пĕр пек пултăр. Çтапаншăн 6 сехет тени учрежденире вăхăт иртерессе кĕтсе сехет çине пăхса лармали хушă. Çулталăк тейĕпĕр. Мĕншĕн вăл çулталăк? Тĕрлĕрен пулма пултаратӑ. Хăш пĕр районĕçтăвкомсемшĕн вăл жалăбă пăхса тухмали вăхăт, шкул директăрĕшĕн кавтăк лартасси чăсăлса пынине пĕлтерекен вăхăт.

Çитменне тата пурин те хăйĕн вăхăчĕ пур. Пурин те мар хутӑ те. Акă А. Патĕрйел районĕнчи Нĕркеч колхозĕн кладовщикĕ Краснов кĕркунне кĕрхи тулă вырăнне çурхине парса актарнă. Çур гектар тулă шăтман вара. Нумай сийен тăватӑ вăл вăхăт унпа усă курма пĕлмесен. Вăхăт тухăçлă ĕçре те, буђварта çӳресе те, пухура ларса та, ĕçкĕре те иртме пултаратӑ. Усси пĕрре мар. Мĕнле пулатӑ-ши вăл вăхăта виçме? Вăхăта перекетлени питех те кирлĕ. Вăхăт вăл тĕрĕс усă курсан—пуйанлăх. Ех, пĕтереççĕ хăшĕсем пуйанлăха. Акă, Йуманлăх йалсовет (Тутаркас р.) пĕр пĕчĕк кĕпер тутармасăр лашапа икĕ çухрăм тавра çӳретет. Çӳреччĕр йал тавра йала кĕреймесĕр, тет пулĕ ĕнтĕ.

Вăн тата Уйпуçĕнчи (Хĕрлĕ Чутай р.) Зайцĕв Иван виçĕ çул хушшинче 21 ĕçкунĕ кăна тунă. Ытти вăхăтра мĕн тунă-ши? Мулкач Иванĕ мулкачла пĕр ĕçкунĕсĕрех пурнас тет пулĕ ĕнтĕ.

Тĕслĕхсем кăтартса çитĕ, вăхăт нумай иртет, йĕтĕн-кантăр шăварма каймала. Вăхăтра шăвармасан типсе кайма пултаратӑ, типсе ларсан—малтан ĕçленĕ пĕтĕм вăхăт ахалех çухалма пултаратӑ.

Н. Чурпай




# Йĕплĕ рецептсем

## Кĕрĕк татĕк Кĕркури

Çук, Кĕркури йатлă мар есĕ, Григорйĕв йатлă çын—Канаш районĕнчи Итемен Кошкăри пушар Дружинин начаљникĕ. Есĕ „чирленĕ“ тенине илтсенех епĕр çав тери хăраса ӳкрĕмĕр.

— Ах!—терĕмĕр епĕр „Капкăн“ пуљницинче ĕçлекенсем,—çав тери ерехе аван ĕçекен çын сайа кайаť. Хăй пурăнмасан та унăн ерехпе тулнă пыршисемпе хăмпăвĕсем сывă пурăнса пире савăнтарччăр хуť. Малашне ĕнтĕ пушар хатĕрĕсене йусама панă укçана кам ĕçсе йарĕ? Тупайрăпăр-ши ун пек çын.?

Хăвăр йал çынĕсем ыйтнă тăрăх епĕр сана сыватма сăмах патăмăр. Хăвăн чирĕнтен сываласах килет пулсан, есĕ акă мĕн ту: урам хушшинче йăванса çӳрекен пушар шыв пички ăшне кĕрсе выртса пăх. Вара пушар тухсан пичкен шăтăкĕсене хăвăн çĕлĕкӳпе, чĕлĕм чăпăкĕпе, пӳрнӳсемпе питĕр. Пичке ăшне шыв тултарасан та шывĕ ăшĕнчех лар, ерех ĕçнĕ çынна сивĕ çапмасť, сивĕ çапсан та ан шарла. Есĕ çухăрнине илтсен хăвăр йал çынĕсем сана йатласах пĕтерĕç:—халăх укçине ĕçсе йатăн та, пушар хатĕрĕсене йусаттармарăн, халĕ пичке вырăнне хăвăн хырăмупа шыв турттар,—тейĕç.

Ерех ĕçме вĕреннĕ хырăму санăн пĕчĕккех мар, аппаланса пăх! Капла та усси пулмасан милицирен кайса ăс ыйт, вĕсем протокол çырса сут умне тăратни тепĕр чух пит лайăх сыватаканччĕ.

## Самарин

Самарин хушаматлăран сана, Самартан килнĕ çын мар-ши, тесе микроскоп витĕр пăхас терĕмĕр. Ӳпне хурса та, месерле те, хăйаккăн та пăхрăмăр сана. Есĕ ăна хăв та сисрĕн пуљ? Есĕ Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Турхан йалĕнчи вулав çурчĕн пуçлăхĕ иккен. Микроскоп витĕр çапла курăнаť:

Санăн ӳпкӳсене, пĕверӳсене, ура тупанĕсене темĕнле-темĕнле приборсем витĕр итлесе пăхрăмăр та, тĕлĕннипе шак хытса лартăмăр. „Капкăн“ тухтăрĕ санран тĕлĕннипе пайан кун та ав çăварне карнипех çӳрет.

Итле есĕ, Самарин, тухтăр сăмахне:—Кахал чирĕпе чирленĕ çын есĕ! Санăн уру вулав çуртне уйăхра пĕрре йе иккĕ çеç кĕрсе тухаť иккен. Санăн куçу колхозниксем кĕнеке вуласшăн çӳренине курма пăрахса, çемçе минтер çине çеç пăхма вĕреннĕ.

Ку чиртен сывалма сана епĕр самокритикă кислотипе пĕçертсе, ăшалантарса илесшĕн. Самокритикă та пулăшмасан Хĕрлĕ Чутай райçутĕçпайĕнчен кайса ăс ыйт. Вĕсем те пулăшаймасан хамăр пата кил. „Капкăн“ пĕкечипе хĕссе илсен çынсем часах йусанаканччĕ.

## Сывă куç суккăрланни

Авал-авалах грексен Гомер йатлă суккăр сăвăçă пурăннă. Хăй суккăр пулин те вăл çав тери илемлĕ поемăсем çырса хăварнă, анчах Быкăв çинчен нимĕн те çырма пултарайман.

Есĕ, Быкăв йулташ, Гомер пек суккăр мар, грек çынĕ те мар—Турханги „Крестьянин“ (Хĕрлĕ Чутай р.) колхоз председателĕ. Куçу та пур санăн, анчах иртнĕ кĕркунне колхоз пахчи тума икçĕр улмуççи лартса хăварнăскерне мулкачăсемпе качакасем кăшласа пĕтернине курмастăн. Хупăсăр шапшурă ларакан йăвăçсем сана çав терийех килĕшеççĕ-им?

Килĕшеççĕ пулсан, райçĕрпайĕпе хăвăр колхозниксенчен пысăк йат илтсе пăх. Апла тусан сывă куç суккăрланма пăрахаканччĕ.

## Пăтăсем

„Капкăн“ пуљницин алăкĕ чăрик! уçăлсанах пĕр шăши кĕрсе тăчĕ. Вăл пăшатан пек шĕп-шĕвĕр хăлхисене тăратнă та ман патмала пĕр хут татки кăмтараť.

— Чипер хăтлан, шăши тус, сире кам ухмахĕ отпуск параť?—тетĕп шăши такамран отпуск илнĕ пулĕ тесе.

Шăши мана çинçешке урипе йунарĕ.

— Есĕ лăпкăрах пул, етем чĕппи! Мана отпуск кирлĕ мар.

Епĕ Чăваш республикинчи халăх сывлăх комиссариачĕ çинчен жалăбă пама килтĕм. Хĕсĕрлеççĕ пире сывлăх комиссариачĕн складĕнче. Пĕтĕм склачĕпе тĕрлĕ пăтăсем, нимĕрсем, сĕткенсем мĕнле пĕçересси çинчен çырнă хутсем 15.890 екçемпљар таран купаланса выртнипе пире çӳремелĕх пушă вырăн та çук. Йарасчĕ вăл хутсене колхозсене, ан тив вуласа апат пĕçерме вĕренччĕр,—тет шăши ман патмалла хут таткине кăмтарса.

— Ох,—тесе сывласа çеç йатăм епĕ,—тĕрлĕ апатсене мĕнле хатĕрлемели çинчен листоксем пичетлеттерсе укçа тăкнă! Ку йурать. Анчах листокĕсем темиçе çул ĕнтĕ складрах купаланса выртаççĕ.

Ох, кунтан сыватмали рецептне Сывлăх комиссариачĕ хăй çырса патăрах. Епĕ, пĕчĕкçеççĕ тухтăр, хутсенчен пăтă пĕçерме пĕлместĕп.

## Вĕçен кайăк

„Вĕçен кайăк“ чирĕпе чирленĕ есĕ, Çемен Йефимчă Скворцов! Те такам пулăшнипе, те хăвăн кăмăлу туртнипе есĕ иртнĕ çулта Хĕвеланăç Çĕпĕр крайĕнчи, Кисловски районĕнчи Йеловкă йалне учителе пырса кĕнĕ. Почтă трубки витĕр пăхсан сан чĕрунта епĕр акă мĕн куртăмăр.—Çав йалта есĕ:—Епĕ гени, пĕтĕм чăваш халăхĕ мана чыслать!—тесе çĕрĕн-кунĕн ĕçсе пурăннă, хĕрарăмсем мунча кĕнĕ çĕре ерех кĕленчисем çĕклесех алăка ватса кĕнĕ. Унтан пĕр хĕре, Шернин Марфине, качча илем пекки тунă та, вăл ача çуратсан унăн йапалисене çаклатса тухса тарнă. Санăн малтанхи арăмусем, Трак районĕнчи те, Çĕрпӳри те çав Марфа пекех тертленеççĕ пулĕ. Тата миçе авланма шутлатăн? Алимент тӳлесрен Кемĕр хулинче çăлăнса йулăп тетĕн-и?

Итле есĕ тухтăр сăмахне:—Çакна вуласанах прокурор „вĕçен кайăксен“ хисепĕнчен тухма пулăшĕ. Епĕр сана рецепт çырса паратпăр, ахалĕн есĕ пĕр хĕрарăм патĕнчен теприн патне вĕçсе çӳресе пĕтĕм йала култарăн..

## Тупах переулкинче

Сăмсусене тытăр! Тупах йалĕнчи (Вăрмар р.) çĕнĕ урам переулкинче сăмсана кĕрекен хайар шăршă çинчен çыратпăр.

Илкай çырса пĕлтернĕ тăрăх, вăл переулкăра фермăри начарланса вилнĕ путексене, тирĕсене сӳсе илнĕ хыççăн, чылайĕшне тислĕк купи айне алтса чикнĕ. Çуркунне пĕр йытă та выçă мар, пурте какай çисе пурăннă. Нийепле çын та вăл переулкăпа сăмсине пăчăртаса хурлăх кĭтартмасăр иртсе кайма пултарас çук.

Вăл шăршă халĕ те пĕтмен пулсан, унтан иртсе кайас пулсан противогаз тăхăнмала.

## Пĕлӳвĕсене хăпартаççĕ

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуркасси йалĕнчи „Кулътурăпа кану паркĕ“ (сачĕ) тесе йат панă вырăна савăнма, канма етемсем пымаççĕ, мĕншĕн тесен, вăл сатăн „директăрĕ“ Козин йул. етемсем валъъи нимĕнле кулътурлă ĕç те унта организацилемен. Унта кулътурлă ĕçсене йĕркелеме хăйĕн ĭозкисене-качакасене хушнă. Кусем пуринчен ытларах симĕс курăксене, сарăлса ларакан улмуççисемпе чийе çырли йăвăççисене, йестествознани йĕнчен пăхса. . ушăлĕсемпе кышласа хăйсен пĕлӳлĕхне хăпартаççĕ.

Качакасен пĕлӳвĕ мĕн чухлĕ ӳснине тĕрĕслесе тухмашкăн екзамĕн пекки туса иртернĕ чухне Козин йулташ хăйпе пĕр хушаматлă чĕрчунсене пурне те „отлично“ отметкăсем лартса парасси курăнать.

## Мĕн вăл воçпитани?

„Капкăн“ йулташ! Мăн Хăмаркка (Хĕрлĕ Чутай районĕ) шкулĕн директăрĕ Железнов ĕçĕсем çинчен райçутпайĕ пĕлет. Есĕр пĕлместĕр ĕнтĕ. Акă вĕсем:

— Санăн мана коъух çӳрен лашине пăхнă пек пăхмала. Епĕ вĕт хуçа. Епĕ сана шалу парса пурăнатăп. Мĕн тума мана хурал тăмастăн? Кала, кам питĕрчĕ!—тесе мухмăрла пуçне çĕмрĕк урапа кӳпчекĕ пек силлесе кăшкăрчĕ вăл шкул сторăжне.

— Ай-уй, Александр Йегорчă, ара, епĕ сире учителъницăпа шкулта ĕçкĕ туса ачасем пухăнниченех сывăрасса кам пĕлнĕ-е. Шкулта ĕçкĕ-çикĕ те Йелизаветă Константинăвăпа... пулкаланă. Такам та çиленмеле. Çитменнине тата алăк шăтăкĕ виттĕр сире пĕтĕмпех курчĕç. Конешнă, ачасем умĕнче... вĕрентнĕ чух лайăх мар. Ача-пăча вăл çапла, задачă шутлас вырăнне те, кĕнеке вулас вырăнне те çавăн çинчен шухăшласа ларма пултарать.

— Шухăшлаччăр. Шухăшлама вĕрентни—воçпитани пулать...

Кала-ха „Капкăн“ йулташ, çапла алăк шăтăкĕ виттĕр воçпитани пама пулать-и? Епĕ учителĕ мар, анчах учителĕсем ачасене çапла майпа воçпитани панине илтмен.

— Епĕр Колъушкинăпа пасара кайатпăр. Вĕрент, Куçмин, икĕ класне те пĕччен. Мĕн, укçа навус кăмпи мар, ил хам пур чух.

Каллех ăнланаймастăп. Вĕренекенсене пăрахса кайса часчасах пасарсене çӳрени те воçпитани пулать-и? Тепĕр учителĕ пасар кунсем класран класа чупса задани парса çӳрет.

Йалсовет председателĕ:—„Шкулта дисциплинă çук, вĕренӳ йапăх, çавăн пирки екзамĕн вăхăтĕнче VI-мĕш класра вĕренекен 27 ачаран 24-шĕ вырăс чĕлхипе „йапăх“, йе „ытла йапăх“. отметкăсем илчĕç тесен, вăл çапла каларĕ.

— Сана мĕн ĕç! Ну, ĕçнĕ, физкулътурă йĕркелĕ вĕрентмен, укçине илнĕ, вутă, хваттер укçи, шкулта пурăннă пирки тивмест пулин те, илнĕ, вĕренӳ йапăх... Вăл мĕн вăрă-хурах туни-им? Епĕ воçпитани паратăп!—терĕ.

Каллех ыйтатăп. Çак ĕçсем пурте вĕренекенсене воçпитани пани пулать пулсан, мĕнле ĕç воçпитани мар-ши? Ман шутпа, ку ĕçсем совет шкулĕн йатне, учителĕн хисеплĕ йатне çĕртни пулать, воçпитани пулмасть.

ÇИГНАЛ.

Арăмĕнчен уйăрлма шухăшласа хунă çын




— Пуринпе те килĕшетĕп. Алиментпа çеç килĕшме пултараймастăп.

# Вулакансен жалăбисем

## САЛАМ САНА, КАПКĂН!

Трак районĕнчи Именкасси шкулĕ вунă çул тултарнине асăнса салам сана, Капкăн! Вунă çул мар ĕнтĕ, 1927-мĕш çулта уçăлнă шкул тăхăр çулта кăна. Анчах астумасăр халех иртертĕмĕр. Астумасăр мар ĕнтĕ, астусах. Ара, кам пĕлет тен директăра килес çулччен вырăнтан кăлараççĕ? Вунă çулхи уйава кашни çулах тума пулать. Вунă çулхи уйава вунă хутчен тусан мĕн пулать вара?

Райĕçтăвком кăçалхи вунă çулхи уйава иртерме 900 тенкĕ панă. Килес çулхи вунă çулхи уйава иртерме мĕн чухлĕ парĕ-ши?

Уйава кирек хăçан иртерсен те çавах мар-и? Пĕр çул малтан, пĕр çул кайран—мĕн уйрăмлăхĕ пур? Преми пултăр, уйав пулать. Директăр премисене валеçме пĕлет. Йыснăшне, Кустарина, икĕ уйăх ĕçленĕ пулин те — 300 тенкĕ, акăшне, икĕ уйăх ĕçленĕ пулин те — 175, акăшĕн ывăлне— Ленскине — 125. Вот пулчĕ те. Пурте хамăрăн, пурте премипе.

«Капкăн», кала-ха, тăхăр çулхи шкула вунă çулхи уйав иртерме райĕçтăвкомран укçа суйса илме йурать-и? Вунă çулхи уйава килес çул тата тума пулать-и? Преми укçине тăванĕсене кăна парас пулсан, мĕншĕн пурне те паман. Куккăшĕ, ашшĕ, шăлнĕ, ачи, пуçани учитĕл мар пулин те, вĕсене директăр преми памасăр хăварчĕ. Абрамăв вĕçене, шкул умĕнче кашни кунах иртсе çÿреççĕ тесе, преми пама пултарнă. Памала мĕн. Халь куккăшĕн сăпкари ачи те: «йыснăшне, акăшне панă, мана çук»,—тет.

Н. ЧУРПАЙ.

## ТАСА КАПКĂН!

Сан патна пырса кĕрсе тухас, терĕм. Анчах тумтирĕмрен уборнăй шăрши кĕнĕрен вăтантăм. Ман тумтире ун пек шăршă мĕн пирки çапни çинчен калас пулсан, хула совечĕ çинчен каламала. Канашран Шупашкара пырса кĕнĕ вырăнта (Пединститут çывăхĕнче) хулари тасамарлăхсене йăвантармали вырăн тунă. Çав вырăн патĕнчен çуран иртсе пынă чухне усал шăршă сăмсана çурнипе сахал, тумтире те çапса йулать.

Халĕ ĕнтĕ епĕ сан патна çул тупса çапла пыма шухăшлатăп: Шупашкар çулĕпе Лакреихă йалĕ тĕлне çитсен уй урлă кайса Йакимăвкă йалĕпе çаврăнса пыма шухăшлатăп. Вăл çулпа пырсан, сан пата кĕрсе тухма тумтир шăршлă пулмĕ.

Çуран çÿрекен.

## КАПКĂН ТЕТЕ!

Епĕ февраль уйăхĕнче çуралса пайан 4 уйăх тултартăм. Аттепе анне мана валли тимĕр кроватькă, çăмăл одейалă, хам йĕпенсен ман айа сармали клейонкă тата мана кирлĕ ытти вак-тĕвек йапаласем Шупашкар магазинĕсенче темчул шырасан та тупса илеймерĕç. Шупашкарти горвнуторг текен мучи епĕ çуралаччен темиçе ерне малтанах: «Хулара ача-пăча магазинĕ уçăлмала» тесе хаçат урлă ача-пăча ĕрчетекен çынсене савăнтарчĕ. Вăл магазин ăçта уçăлнă-ши? Аннепе пĕрле хула тăрăх темиçе хут та шыраса çÿрерĕмĕр — тупаймарăмăр. Кайран вара çÿлте, сывлăшра стратосферăра уçăлнă пулĕ, тесе шухăшларăмăр. Мĕнле те пулсан стратосферăри магазина хальтерех айала антарма пулмĕ-ши?

ЛИМĂ.

## ПАХА КАПКАН!

Сан пата тахçанах çырса йарас тенĕччĕ те, анчах Йетĕрнере канверт çук. Почтăра канверт пама ыйтсассăн кирек хăçан та: Мĕн тăвас? Çук,—тесе ответ параççĕ.

Папкăсем, хутсем, ручкăсем, кăрандашсем сутакан магазинра ларакан прикашчиксем: канверт тенине нихăçан та сутса курман, мĕнле йапала-ши вăл, теççĕ.

Паха Капкăн, почтă та, магазин та çавăн пек йапăх ĕçленине кура, чăтаймарăм, сан пата çырса йарасах, терĕм. Çыруне йама хулара тупма çук канверта та хĕрхенмерĕм.

РАБОЧИ.

## КАПКĂН МУЧИ!

Епĕр, Уйпуçĕнчи хорта йурлакансем, хамăрăн художĕствăлă пултарулăха кăтартма ийунĕн 3-мĕшĕнче 9 сехет çурăра Хĕрлĕ Чутай район центăрне пухăнтăмăр. Радиофестивале иртерме уйăрнă районти комиççи пирĕн пултарулăха пăхса тухма Хĕрлĕ Чутай клубне пырасса кĕтсе пĕр сехет лартăмăр, ик сехет, виççĕ... тăватта... пиллĕк... ултă сехет... Çапла 9 сехетре пыма пулнă комиççи пырасса кĕтсе ларнă хушăрах пирĕн хырăмсем хыр тăрне хăпарса ларнине, унччен хырнă сухалсем çĕнĕрен хырмала пулса кайнине сисрĕмĕр.

Сухалсене Хĕрлĕ Чутай клубĕнче ĕçлекен парикмахĕра хыртартăмăр, хыр тăрне хăпарса кайнă хырăма нимĕнпе те лăплантараймарăмăр. Ăна пĕлнĕ пулсан пирĕн, ваттисен сăмахне аса илсе, хамăрпа пĕрле виçшер çăкăр чиксе пымала пулнă. Епĕр шухăшланăччĕ: комиççи пырасса кĕтсе ватăлсах кайатпăр пулĕ тенĕччĕ. Районри комиççи кăнтăрла иртни 6 сехет çитсен аран-аран пуçтарăнса пырса хăйĕн ĕçне тытăнчĕ. Ир пыма пулнăскер, каç пулсан та пулин пырса курнăшăн, епĕр вăл комиççийе Капкăн урлă пысăк тав кÿретпĕр.

ХОРИССЕМ.

## ЙУРАТНĂ КАПКĂН!

Пирĕн Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Турхан йалне 1934 çул пĕтнĕрен вара кино пымасть. Вулав çурчĕ, ветпункт, йалпо, йалсовечĕ, шкул тенисем пур, кино çук. Кино курма Шупашкара пыма шухăшлатăп. Унта пырсан сан пата та кĕрсе Турханта радио çукки çинчен те сана каласа парас, тетĕп.

Сывă пулса йул, Хĕрлĕ Чутай кино базине Турхан çыннисенчен 30 градус сивĕ салам кала.

Мишă ВАНАДИ.

## КАПКĂН ТУСĂМ!

«Çурлапа мăлатук» колхоз членĕсем Ивановпа Васильйĕв Акатуй вăхăтĕнче Елĕк райвăрманхуçалăхĕн леçникĕсем Дормидонтăвпа йулташĕ вăрманта пушăт вăрласа каснине курнă. Тытсан вĕсем иккĕшĕ те: тархасшăн никама та ан калăр, сире хÿть те лавĕпе касăр—чару пулас çук,—тенĕ,—никама та калама хушман та, есĕр те ун çинчен никама та ан калăр, Капкăнра анчах пичетлесе кăларăр.

Терентйĕв.

# Ĕçлĕ çынсен канашлăвĕ

Пайан çутçанталăкăн анлăн та симĕс улăхне икке уйăракан хăрушă та тискер Хуравар çырмин нумай çулсем хушши йусаман кĕперĕ çийĕнче Елĕк районĕнчи „ĕçпе“ палăрнă колхоз председателĕсемпе вулав çурчĕн пуçлăхĕсен канашлăвĕ пулса иртессĕн туйăнаť. Канашлура пĕртен пĕр ыйту: Йулашки вăхăтра кам мĕнпе хăйне палăртнă?—йатлă ыйту тăратассăн туйăнаť.

Паллах, кашни çыннăнах хăйне уйрăм паллăсем пулма пултараççĕ. Хăшĕ ĕçлесе палла тухаççĕ, хăшĕ ерех кĕленчи пушатма, хăшĕ улаха çÿреме, хăшĕ—сăмса шăтăкĕ чавалама йуратаť. Сахал-и çынсем хушшинче паллăлăхсем? Анчах кунта пайан ĕç урăххи çинчен пулса иртессĕн туйăнаť. Канашлăва килнисем кашнийех йулашки вăхăтра хуçалăх тĕлĕшпе, культурă тĕлĕшĕпе, ăслăлăх тĕлĕшпе пысăк çитĕнÿсем туса тĕнче умĕнче палăрни çинчен каласа парассăн туйăнаť.

Пуху уçăлсан, черет йĕркипе сăмах Мăн Тукташри „М. Горький“ колхоз председателĕ илессĕн туйăнаť. Унăн тĕнчене тĕлĕнтермели ĕçсем питех те нумай. Чи малтанах вăл иртнĕ çуркунне (1935 çулта) шыва хутнă курăса колхоз тăшманĕсем вăрласран пăр айĕнче хĕл каçарни çинчен, тума пуçăннă фермă çурчĕпе колхоз клубне, пĕрре çĕрсен тек çĕрмеле ан пултăр тесе, 2—3 çул хушши çăмăр айĕнче усрани çинчен калама тытăнĕ.

Ăна пÿлсех Охверкă колхоз председателĕ сиксе тухĕ.

— Йулташсем,—тейĕ хастарлăн,—епĕр кăçалхи çул Ураскилт колхоз председателĕпе çĕрулминчен пĕçермесĕрех улма нимĕрри тумали меслет тупрăмăр. Ку тĕлĕшпе Ураскилт колхозĕпе ăмăрту йĕркипе кашнийех 200—300-шер пăт çĕрулми нимĕрри хатĕрлерĕмĕр. Иртсе çÿрекенсем тĕсне те, шăршине те, тутине те тутанса пăхма улма пусси айăккине пырăр. Йĕкленнипе хăсса варалаcа хăваракансене айăплатпăр,—тейĕ те сăмахне пĕтерĕ.

Черете çырăннисем пĕри те пĕри маларах тухса каласасшăн тапăртатса шавласа кăна тăрĕç. Пĕртен пĕр Мăн Тукташри вулав çурчĕн пуçлăхĕ ни ĕçлеме, ни ĕçме пĕлменскер хăйенчен хăй вăтанса пуса усса тăрĕ. Çынсене кăкăртан та, айакран та чавсасемпе перкелесех Ураскилтри вулав çурчĕн пуçлăхĕ сиксе тухĕ.

— Мĕншĕн, мĕншĕн мана хисеп памастăр. Мĕншĕн-а? Епĕ комсомолĕс тата вулав çурчĕн пуçлăхĕ, унтан манăн ĕçĕмсем сирĕнниччен шăши хÿри чухлĕ те кайа йулмаççĕ. Епĕ пйесăсăр, сценăсăр, артиссемсĕр тĕнчене тĕлĕнтермеле, йала култармала чĕрĕ постановкă пама пултаратăп. Акă майăн 1-мĕш каçхине спектакăл умĕн ÿсĕрпе шкул алăкĕ умне пырса хăсса вытма тытăнтăм (хам хытах астăвлймастăп). Тÿрех калас пулаť—питĕ ăнăçлă тухрĕ. Хăшĕ кулчĕç, нумайĕшĕ тĕлĕнчĕç тата ытларах йĕрĕнчĕç. Йулашкинчен йĕрĕннисем сурса, тарăхнисем таптаса хăварчĕç. Ăçтан пур çынна та йураса çитеретĕн, тейĕ те халăх хушшине кĕрсе çухалĕ.

Пурте ахăлтатса кулса йарĕç. Вată кĕпер те чăтса тăраймĕ. Кулăпа пĕрле антăхса кайсах ÿкĕ. Хуравар председателĕ чи айала пулмаласкер темĕншĕн пĕчченех çыран хĕрне йулĕ[1])...

Канашлу пĕтмесĕрех саланчĕ.
Канашлу çыруçи. А. Лукин.

◆●◆

## Пуштă йешчĕкĕ

**Парецкийе.** Пĕлтĕр паранкă кăларнă чухне пулнă çитменлĕхсем çинчен ма тин çырса пĕлтеретĕн? Çийĕнчех çырса пĕлтерме кирлĕ пулнă.

**Ф. Филиппăва.** Есĕ „Капкăн“ редакцине йанă сăвă айне çырнă: „Çак стиха çыракан адрес Хĕвеланăç Çĕпĕр крайĕ, Шурă р-нĕ, Ашăту йалĕнчи Филиппăв Федор Павлович“ тенĕ. Апла мар. Вăл стиха çыракан 1768—1844-мĕш çулсем хушшинче пурăннă Крылов Иван Андрейĕвич поет. Вăл сăвă чăвашла „Шурăмпуç“ журналра пичетленсе тухнă. Апла пулсан есĕ „сăвă вăрри“ пулса тăратăн Çапла-и?

**Çăлтăра.** Драмкружокăн билет сутаканни тÿрĕ çын пек мар туйăнаť пулсассăн, унăн вырăнне билет сутма урăххине лартă. Клуб заведуйушчи пулса ху ĕçлетĕн вĕт. Билетсене сутасси не йĕркелесси санран килет.

**К. Иванова.** Сан çинчен йулташу çапла çырса пĕлтерчĕ: „Пирĕн К. Иванов йалкор хăйĕн кашни çырнă заметкинех пĕр екземплăрне йалти стена хаçатне параť, иккĕмĕшне—районри хаçата, виççĕмĕшпе тăваттăмĕшне — Шупашкарта тухса тăракан тĕрлĕрен хаçатсене, пиллĕкĕмĕшне—„Капкăн“ редакцине йараť тенĕ. Тĕрĕс-и вăл?

**Малайа.** Маркăсăр йанă çырусене çăлса илес пулсан пирĕн укçа тÿлес пулаť. Есĕ 2 кун хушшинче 7 çыру маркă çыпăçтармасăр йанă. Вăл çырусенче есĕ паллăрах ĕçсем çинчен мар, йалти хайар йытăсем, шăши тытман кушаксем çинчен çеç çырнă пирки нихăшĕ те пичете кĕреймерĕç.

---

[1]) Халĕ çакăнта асăннă Хуравар çырмине кайса пăхсан вată кĕпер кулăпа антăхса чăнахах кайсах ÿкни палăраť.

---

Секретарь и вып. редактор *И. ИЛЛАРИОНОВ.* За ответ. редактора *Ф. АЛЕКСАНДРОВ*

Сдано в производство 23-VI—36 г. Подписано к печати 10-VII—36 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 434. Заказ № 1100

Формат бумаги 58×88 1/16 Об'ем 2, 5 п. л. Гор. Чебоксары тип. № 1 Чувашгиза. Тираж 6300 Изд.-газ. „Канаш“

Журнал хаке 25 пус




— Итле, итле, çитăр пичче! Кам йурланине чухласа илтĕн-и-ха?
— Ан чăрмантарха... Пĕлетĕп... Епĕ мак арăм ун пек йурлаймаст пулĕ тесе...